чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

156/26562/ №

Ытлари кун, 2014, çурла (август), 12

Хакĕ ирĕклĕ

WWW.hypar.ru

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн ХУШĂВĔ

«Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне тата физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи Канаш ларăвне ирттересси çинчен

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2009 çулхи утă уйăхĕн 27-мĕшĕнчи «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери спорт форумĕ çинчен» 863-мĕш Указĕпе килĕшӳллĕн:

1. Шупашкарта çак мероприятисене ирттермелле:

а/ 2014 çулхи юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче – «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне;

ă/ 2014 ç. юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче – физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи Канаш /малалла – Канаш/ ларăвне. Кун йĕрки – «2016-2020 çулсенче физкультурăпа спортăн пурлăхпа техника базине аталантарасси. Раççей Федерацийĕнче официаллă физкультурăпа спорт мероприятийĕсен тытăмне çĕнетсе улăштарасси» /малалла – лару/.

2. Раççей Федерацийĕн Правительствин «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне ирттерессине тивĕçтермелле.

3. Раççей Федерацийĕн Администрацийĕн тата Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Ĕçĕсен управленийĕн:

а/ Раççей ФСОпа тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе пĕрле ларăва хатĕрленсе ирттерессине тивĕçтермелле;

ă/ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе пĕрле материалсене лару тĕлне кăларассине тата вырăнсене ярса парассине, çавăн пекех ларăва массăллă инфоромаци хатĕрĕсенче çутатассине тивĕçтермелле.

Çак хушу ăна алă пуснă кунран вăя кĕрет.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В.ПУТИН.

2014, çурла, 6, 257-рп №.

«Раççей – спорт çĕр-шывĕ»

Шупашкар 2014

Çакăн пек ятпа Чăваш Енре юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче Пĕтĕм тĕнчери V форум иртет. Çав кунах Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи физкультурăпа спорта аталантармалли Канашĕн анлă ларăвĕ иртĕ. Унта «2016-2020 çулсенче физкультурăпа спортăн техника базине аталантарасси. Раççей Федерацийĕнче официаллă физкультурăпа спорт мероприятисен тытăмне çĕнетсе улăштарасси» ыйтăва пăхса тухĕç. Çаknашкал хушăва алă пуснă Раççей Президенчĕ Владимир Путин.

Аса илтеретпĕр: «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери форума Раççей Президенчĕн 2009 çулхи утă уйăхĕн 27-мĕшĕнчи Хушăвĕпе килĕшӳллĕн физкультурăпа спорта, халăхсен хушшинче спорт çыхăнăвне йĕркелес, сывă пурнăç йĕркине сарас тĕллевпе ирттереççĕ. Форум пуçласа 2009 çулта Хусанта пулнă. Ун хыççăн ăна Мускав, Саранск тата Якутск йышăннă. 2012 çултанпа форум икĕ çулта пĕрре иртет. «Асăннă форума Чăваш Республикинче ирттерме йышăнни регионта физкультурăпа спорт аталанăвĕ çӳллĕ шайра пулнине пĕлтерет», – тесе шухăшлать республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев. Ахальтен-им 2013 çул кăтартăвĕсем тăрăх Чăваш Республики физкультурăпа спорт аталанăвĕн «Раççей регионĕ» номинацире нации премине пуçласа тивĕçнĕ. 2012 çул кăтартăвĕсем тăрăх вара Пĕтĕм Раççейри смотр-конкурсра иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Паян та Чăваш Енре спортăн çĕнĕ комплексĕсемпе Олимп центрĕсене хута ярас енĕпе хастар ĕçлеççĕ. 2013 çулта республикăра пурăнакансен 46 проценчĕ спорт сооруженийĕсене çӳренĕ, кашни виççĕмĕш çын физкультурăпа тата спортпа туслă. Кунсăр пуçне Раççей Федерацийĕн Спорт министерстви Чăваш Ене спорт хатĕрленĕвĕн федераци стандарчĕсене пурнăçа кĕртмелли эксперимент вырăнĕ тесе палăртнă.

■ **А.ВАСИЛЬЕВА**

Ĕçлĕ çул çӳрев

Хамăрăн – пахарах: тутлăрах та, йӳнĕрех те

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕ

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев иртнĕ эрне кун Вăрнар тăрăхĕнче пулчĕ. Малтанах вăл «Вăрнарти аш-какай комбиначĕ» АУОн Малтикасра вырнаçнă вильăх-чĕрлĕх комплексĕпе паллашрĕ.

Кунта ĕçлекенсен Михаил Васильевич умĕнче мăнаçланма тивĕçлĕ сăлтав пур. Коллектив районта малта пырать кăна мар, вăл пĕтĕм районти сĕт-çу фермисем туса илекен продукцин 37 процентне парать. Фермăра 830 ĕне пулнине, кашни кун тирпейлекен предприятие 15 тоннăран кая мар пахалăхлă сĕт ăсаннине, унăн кашни килограмĕ вăтамран 18 тенкĕне кайнине шута хурсан комбинат кассине куллен мĕн чухлĕ чĕрĕ укçа кĕнине тĕрĕс палăртма математикран пулăшу ыйтни кирлех-ши? Хăйсем палăрăмлă тупăш илнине лайăх ăнланаççĕ кунта ĕçлекенсем. Вĕсем хальхи йышши электротехника кăткăслăхне алла илнĕ, комплексри йывăр ĕçсене пĕтĕмпех механизмсем тунине пула продукци калăпăшĕ ӳснипе пĕрлех унăн хăй хаклăхĕ ытти çĕртинчен чылай йӳнĕрех. Вильăх-чĕрлĕх пăхакансен ӳсĕм-çитĕнĕвне хак панă май республика Пуçлăхĕ çакна палăртрĕ: «Ăнăçуллă ĕç ăшă сăмаха тивĕç. Эсир туса илекен продукцие вырнаçтарас ĕçре малашне йывăрлăх-чăрмав пулмалла мар. Раççей Президенчĕпе Правительство пирĕн çĕр-шыва хирĕç санкцисем йышăннă патшалăхсенчен хăш-пĕр тавар кӳрсе килессине вăхăтлăха чарса лартасси пирки тунă йышăну импорт çулне пӳлме май парĕ. Халĕччен вара пирĕн лавккасен сентрисем чикĕ леш енче кăларнă тĕрлĕ йышши продуктсемпе тулнăччĕ. Пахалăхлă, таса чăваш апат-çимĕçне хĕссе кăларма тытăнăччĕ вĕсем».

Михаил Васильевич комплексра ĕçлекенсене çĕр-шыв ертӳлĕхĕ вăхăтра кăларнă йышăнупа пĕлсе те вырăнлă усă курма чĕнсе каларĕ.

Аш-какай комбиначĕн хушма предприятийĕнче кăçалхи авăн уйăхĕ тĕлне сăвакан ĕнесен кĕтĕвне 900 пуçа çитерме тĕллев лартнă. Самăртма хупнă вăкăрсен йышĕ те ӳсмелле. «Вĕсене ăçта вырнаçтармалла?» – йыту тăмасть умра. Дирекци çавна малтанах шута илнĕ, халĕ строительсем çĕнĕ вите тунă çĕрте ĕçлеççĕ.

Йышлă вильăх-чĕрлĕхе усрама апат ытлăн-çитлĕн кирлĕ. Комбинат директорĕ Николай Аливанов каланă тăрăх – ку енĕпе те йывăрлăхсем пулмалла мар. Кăçал тĕш тырăсемпе пăрça йышши культурăсем 6100 гектар çинче çитĕнеççĕ, çав шутра куккурус 1300 гектар лаптăк йышăнать.

Республика Пуçлăхĕ ку тăрăха килес умĕн çĕрле çуса иртнĕ вăйлă çумăр вырмаçăсене хире тухма чăрмантарни пирки Михаил Васильевича пăшăрхануллă кăмăлпа пĕлтерчĕç тыр-пул ăстисем. «Çанталăк уяртасса кĕтсе лармалла мар паян. Майлă самант тупăнсанах унпа туллинрех усă курма тăрăшăр. Нӳрĕ вăрлăха типĕтме сирĕн ятарлă агрегат та пур», – сĕнчĕ вĕсене Михаил Игнатьев. Вăл çавăн пекех «Промтрактор» АУО предприятие кӳнĕ парне – Шупашкарта кăçал туса кăларнă пĕрремĕш «Агромаш» комбайн хирте мĕнлерех ĕçленипе те кăсăкланчĕ...

Вăрнар тăрăхĕнчи аграри тытăмĕнче вăй хуракансен ĕçĕ-хĕлĕпе республика ертӳçи кăмăллă юлни уçăмлăнах курăнчĕ. Çакăн хыççăн вăл район центрĕнчи темиçе учреждение çитсе курчĕ. Юлашки вăхăтра унăн çул çӳревĕн программинче пасар тата автостанци пулнине вулакансем асăрхаса илчĕç ĕнтĕ. Вăрнарта та çав йăлана тĕпе хучĕ Михаил Игнатьев. «Сантехгазстрой» ОООна пăхăнса тăракан пасарта – ăна Вăрнарсем «Суту-илӳ центрĕ» тесе ят панă – иртен пуçласа кашни халăх хĕвĕшет. Кунта районти, ун тулашĕнчи ялсенче пурăнакансем хăйсен хушма хуçалăхĕсенче туса илекен пахча çимĕçе, сĕт-çупа ашкакая, ытти продукта сутма килеççĕ. Пасар дирекцийĕ вĕсенчен вырăн укçи илместмĕн. Акă Михаил Васильевич пылпа суту тăвакан вăтам çулсенчи арçынна сывлăх сунчĕ, унпа чăвашла калаçма пуçларĕ. Вăрнарта пурăнакан Иван Федоров вун тăватă çул каялла хурт-хăмăр ĕрчетме пуçлани, ку отрасль çемьене тупăш кӳни, çакăн хыççăн хăй те хресчен-фермер хуçалăхĕ йĕркелени çинчен пĕлтерсен республика Пуçлăхĕ ăна малашне те çавăн пек тăрăшулăхпах ĕçлеме ăнăçу сунчĕ.

Пасарти павильонсен сентрисем çинче республикăра туса кăларнă продуктсем ытларах пулнине курнă хыççăн Михаил Васильевич хăйĕн хĕпĕртĕвне пытармарĕ: «Хамăрăнне мĕн çиттĕр? Вăл – пахарах та, тутлăрах та, йӳнĕрех те». Анчах уйрăм пайтăçăсем ыйшăннă вырăнсене çитсен, вĕсенчен хăйсем сутакан продуктсен сертификачĕсене ыйтсан, лешсем вара пуçĕсене çĕрелле усса тăнине курсан унăн кăмăлтуйăмĕ çавăнтах улшăнчĕ, çакна вăл сутăçсем потребительсен прависене тӳрремĕнех пăснипе çăлтавларĕ. Сутлăхра Вăрнарти çăкăр заводĕнче пĕçернĕ çăкăр, çăкăр-булка изделийĕсем вырăн тупманшăн та пасар дирекцине асăрхаттарчĕ.

●➡ 2 стр.

КУН хыççăн КУН

56-04-26

«Стрижсем» – Шупашкар тӳпинче

«Стрижи» паллă ушкăн летчикĕсем кăçал Чăваш Республикин Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа Раççей Оборона министрĕ Сергей Шойгу калаçса килĕшнипе Раççей Сывлăш флочĕн кунне Шупашкарта паллă тăвĕç. Вĕсем Шупашкар хули 545 çул тултарнине халлланă уявра пухăннисене илемлĕ авиашоу парнелĕç.

Çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче Хĕрлĕ тӳремре «Стрижи» пилочĕсем 5 МиГ-29 çар истребителĕпе тĕлĕнмелле шоу йĕркелĕç. Вĕсем 200 метртан пуçласа 1,6 пин метр çӳллĕшĕнче сехетре 300-800 сухрăм хăвăртлăхпа вĕçĕç. Авиаци ушкăнĕ тĕрлĕ çаврăнупа трюк пурнăçлĕ. Сăмах май, паллă МиГсене тӳпере кăна мар, Шупашкар аэропортĕнче те курма май пулĕ. Шупашкар хула администрацийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх – ачасем валли ятарлă экскурси йĕркелеме те палăртаççĕ. Çар машинисен умĕнче сăн ӳкерттерме те май килĕ.

А.ГЛАДКОВА.

«Хресчен çурчĕ» çĕнелĕ

ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов федераци пĕлтерĕшлĕ «Хресчен çурчĕ» культура еткерлĕхĕн объектне çитсе курнă.

Тĕп хулари К.Иванов урамĕнчи 1-мĕш çурт – виçĕ хутлă чул çурт, В.Н.Александров архитектор проекчĕпе 1927 çулта арçынсен Çеттуй Троица монастирĕнче туса лартнăскер. Вăл 1917 çулхи революци хыççăн Шупашкарта кун çути курнă общество объекчĕ шутланать.

Çурта хăна çурчĕ валли хăпартнă. 300 вырăнлă залра массăллă мероприятисем ирттернĕ. Унтах «Ударник» кинотеатр ĕçленĕ. «Хресчен çурчĕ» хыççăн малалла «Турист» хăна çурчĕ, учрежденисем вырнаçнă. 1995 çулта çурта Шупашкар-Чăваш епархине панă. Унта тĕн училищи вырнаçнă.

Хальхи вăхăтра çуртăн никĕсне çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Вадим Ефимов юсава çанталăк япăхланиччен вĕçлемешкĕн сĕннĕ.

Н.ГЕОРГИЕВА.

100-мĕш çуралнă кун

«Ĕмĕр ĕмĕрлесси уй урлă каçасси мар», – тет Канашра пурăнакан Мария Байгулова. Мария Дмитриевна çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче 100 çул тултарнă. Унăн паян аса илмелли питĕ нумай, савăнăçли те, хурлăхли те пур вĕсен йышăнче.

Уйрăмах Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтне аса илсен куçĕсем шывланаççĕ унăн. Ун чухне çап-çамрăк Мария Канаш станцинче ресторанта ĕçленĕ. Унта эвакуацие килекен хĕрарăмсемпе ачасем апатланнă. Мария Байгулова хăйĕн ĕмĕрĕнче пуçарулăхпа, хастарлăхпа палăрнăшăн нумай Хисеп хутне тата Тав çырăвне тивĕçнĕ. Ĕç ветеранĕн, тыл ĕçченĕн икĕ ача, тăватă мăнук, 7 кĕçĕн мăнук, кĕçĕн мăнукĕн пĕр ачи пур. Шураппана Канаш хула администрацийĕн культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн пайĕн пуçлăхĕ Наталия Золотова саламланă, Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн саламлă сырăвне, Канаш хулин администрацийĕн пуçлăхĕн Людмила Ивановăн ячĕпе асăнмалăх парне панă. Ватă çак кун пысăк çемьепе, йышлă тус-тăванĕпе кĕрекене ларнă.

Р.МЕДОВАЯ.

Çĕрпӳре – Хула кунĕ

Çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче Çĕрпӳ хули 425 çул тултарнă. Ăна халлланă уяв тĕп стадионта иртнĕ. Çак кун Çĕрпӳ çыннисемпе хăнисем тĕрлĕ мероприятие тата илемлĕ шоусене хутшăннă.

Хулари алă ăстисен куравĕ нумай куракана пухнă. Ачапăча валли ятарлă вăйă программи хатĕрленĕ. Пултаруллă амăшĕсем валли «Ача кӳмисен парачĕ» иртнĕ. Хула кунĕнче хĕрсем – шĕвĕр кĕлеллĕ туфлисемпе, качăчсем вара çăм атă тăхăнса чупса ăмăртнă. «Юратнă хула» фестивальте чăваш тата вырăс юрри-кĕвви янăранă. Çав вăхăтрах тĕрлĕ халăх ташшисемпе паллашма май килнĕ. Пухăннисем чăваш наци çи-пуçĕпе те хаваспах паллашнă.

Çĕрпӳсене Хула кунĕпе ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ-строительство министрĕ Олег Марков, Çĕрпӳ районĕн ентешлĕхĕн председателĕ Владимир Егоров, Шупашкарти коопераци институчĕн ректорĕ Валерий Андреев тата ыттисем саламланă. Çĕрпӳ район пуçлăхĕ Татьяна Кузьмина, район администрацийĕн пуçлăхĕ Сергей Артамонов *(сăн ӳкерчĕкре)* пурне те ăнăçусемпе çĕнĕ çитĕнӳсем суннă, чи пултаруллисене Хисеп хучĕсемпе, Тав сырăвĕсемпе чысланă. «Çĕрпӳ хулин Хисеплĕ гражданинĕ» ята кăçал Игорь Никифоровпа Владимир Филимонов тивĕçнĕ.

А.ВОЛЬНАЯ.

Пулăм

Палăк умне – чечексем

Виççĕмĕш çул ĕнтĕ тăван халăхăмăрăн мухтавлă ывăлĕ Андриян Николаев пĕрремĕш хут тĕнче уçлăхне çĕкленнĕ кун тата старт илнĕ вăхăтра – çурла уйăхĕн 11-мĕшĕнче, 11 сехет те 30 минутра – Шупашкарти унăн палăкĕ умне халăх йышлă пухăнать.

«Байконур» космодром ветеранĕ Евгений Южалин полковник пухăннисене Андриян Григорьевича вĕçеве хатĕрлени тата космос тĕпчевĕ мĕнле аталанса пыни пирки каласа кăтартрĕ. Унăн сăмахне космонавтика ветеранĕсен Чăваш Енри пĕрлĕхĕн канашĕн ертӳçин çумĕ Василий Прокопьев подполковник тĕрлĕ фактпа пуянлатрĕ.

Савăнăçлă митинга хутшăннисем Андриян Николаев космонавт палăкĕ умне чечексем хучĕç.

Юрий СТЕПАНОВ.

Украинăран килнисене хăтлăхпа, ĕçпе тивĕçтермелле

Çурла уйăхĕн 11-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕç тăвакан влаç органĕсен, федераци ведомствисен территори органĕсен тата хула округĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ. Видеоçыхăну мелĕпе йĕркеленĕ канашлăва хула-район администрацийĕсен пуçлăхĕсем те хутшăннă.

Михаил Игнатьев пĕлтернĕ тăрăх – çурла уйăхĕн 10-мĕшĕнче Чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен министерствăн самолечĕ республикăна Симферопольтен Украинăн 112 гражданинне илсе килнĕ, çав йышра 34 ача. ЧР Чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров каланă тăрăх – вĕсене пурне те вăхăтлăх пурăнмалли пунктсене вырнаçтарнă: 62 çынна – «Чувашия-курорт» хăна çуртне тата 50 çынна – Хевтесĕр ачасемпе çул çитмен çамрăксен реабилитаци центрне. ЧР Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Наталия Тараканова паянхи кун тĕлне куçса килме тивнĕ 24 çынна ĕçе вырнаçтарни çинчен пĕлтернĕ. Малтанхи кăтартусем тăрăх – вакансисен банкĕнче Украинăран килнĕ кашни çын валли 3-4 сĕнӳ пур, 800 ваканси ытла – пурăнмалли кĕтеспе пĕрле.

Республика Пуçлăхĕ Украина гражданĕсене хальтерех ĕçе вырнаçтармашкăн ăнăçлă условисем туса пама чĕнсе каланă.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов уйхирти ĕçсем еплерех пынипе паллаштарнă. Çурла уйăхĕн 11-мĕшĕ тĕлне 77,3 пин гектар пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене çулнă, 75,8 пин гектар çинче çапса тĕшĕленĕ. Республикипе илсен талăкра вăтамран 4 пин гектар çинче культурăсене çапса тĕшĕленĕ, вырмана 300 яхăн комбайн хутшăннă. Пĕтĕмпе 154,7 пин тонна тырă çапса тĕшĕленĕ, гектар тухăçĕ 20,4 центнерпа танлашать.

Михаил Игнатьев тырра уйрăммăн вырса, уйрăммăн çапма чĕнсе каланă. Пурнăç кăтартса панă тăрăх – республикăра çак мелпе усă куракан хуçалăхсем кашни çулах уй-хир ĕçĕсене тата кĕр акине чи малтан вĕçлеççĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ çавăн пекех чикĕ леш енчен хăш-пĕр апат-çимĕç таварĕсене кӳрсе килессине чарнă май çĕр-шыври тавар туса кăларакансемшĕн лайăх условисем йĕркеленине палăртнă. «Лавккасен сентрисем çинче пирĕн хресченсем туса илекен паха, экологи тĕлĕшĕнчен таса апат-çимĕç ытларах сутăнма тивĕçлĕ», – тенĕ Михаил Игнатьев.

Вĕренӳ объекчĕсене 2014-2015 вĕренӳ çулне хатĕрлесси çинчен Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов каласа панă. Муниципалитет комиссийĕсем тата ЧР Вĕренӳ министерстви çумĕнче йĕркеленĕ республика комиссийĕ вĕренӳ енĕпе ĕçлекен 940 организацие йышăнма пăхнă, ЧР Культура министерствин, Физкультурăпа спорт министерствин, Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин комиссийĕсем – 105 организацие, федерацин аслă вĕренӳ заведенийĕсен тата вăтам професси пĕлĕвĕ паракан организацисен филиалĕсен комиссийĕсем – 26 организацие.

2014 çулхи çурла уйăхĕн 8-мĕшĕ тĕлне республикăра вĕренӳ енĕпе ĕçлекен 609 организацие йышăннă, 7 муниципалитетра ку ĕçе вĕçленĕ.

2014 çулта Шупашкар районĕнчи Янăшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкула хута яма палăртнă. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне Канаш районĕнчи Вăтакас Татмăш шкулне юсаса çĕнетĕç. Владимир Иванов çавăн пекех Чăваш Ен федераци бюджетĕнчен шкулсенчи спорт залĕсене юсама уйăрнă укçатенкĕпе ăнăçлă усă курнине, çавна май тата 14 спорт залне юсама хушма укçа илнине палăртнă.

Михаил Игнатьев хăш-пĕр подрядчик кирлĕ пек ĕçлеменни çинчен каланă, авăнăн 1-мĕшĕччен çитменлĕхсене хăйсен шучĕпе пĕтерттерме хушнă.

■ **А.ЛЬВОВА**

Çанталăк çинчен

Паян хĕвеллĕ çанталăк пулать. Çил çурçĕр хĕвел анăçĕнчен 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 25, çĕрле 17 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 750 мм, сывлăшри нӳрĕк 47 процент.

Кун тăршшĕ 15 сехет те 18 минут.

Ыран хĕвеллĕ çанталăк пулать, вырăн-вырăнпа çумăр çăвать. Çил кăнтăр хĕвел анăçĕнчен 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 26, çĕрле 21 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 750 мм, сывлăшри нӳрĕк 49 процент.

Кун тăршшĕ 15 сехет те 14 минут.

Хамăрăн – пахарах: тутлăрах та, йӳнĕрех те

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕ

Михаил Васильевич автостанцире пассажирсемпе калаçрĕ, вĕсенчен Вăрнара мĕн сăлтавпа килнине ыйтса пĕлчĕ. «Эпĕ Пенси фончĕн районти уйрăмĕнче пултăм-ха, – терĕ Турхантан килнĕ хĕрарăм. – Ĕмĕрĕме ялта ĕçлесе ирттертĕм». «2015 çулта ялта ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă çынсен пенсине 25 процент ӳстерме пăхнă, – лăпкăн хуравларĕ ăна республика Пуçлăхĕ. – Унччен кирлĕ документсене хатĕрлесе пама тăрăшăр...»

Пур ыйтупа та кăсăкланассине тĕпе хуракан Пуçлăх автостанци çывăхĕнчи йĕркесĕрлĕхе те асăрхама ĕлкĕрнĕмĕн. Кунта хăш вăхăтра тата кам çӳпçап купи тăкса хăварнине никам та татса калаймарĕ...

Район центрĕнчи Жорж Илюхин ячĕллĕ урамри нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсенче те хальлĕхе пĕтĕмпех йĕркеллĕ мар-ха. Тирпейлĕхпе тасалăхшăн тивĕçлипе тăрăшни питех сисĕнмест. Республика Пуçлăхĕ кунта пулнă вăхăтра «Интех» ООО управляющи компанине чылай асăрхаттару турĕ. Вăл хăйĕн тивĕçĕсене туллин пурнăçласа пымасть-мĕн, çут çанталăк газĕпе усă курнăшăн пуçтарăннă пысăк парăмĕсене татас вăхăта тăсса янă т.ыт.те.

Çав кун Вăрнар районĕн тĕп больницине пынă çынсемпе те республика Пуçлăхĕ чунне уçса каласрĕ, вĕсенчен сывлăх хуралçисем хăйсен тивĕçне мĕнлерех пурнăçланине ыйтса пĕлчĕ. Николай Тинюков тĕп врач ăна сывлăх учрежденийĕн паянхи йывăрлăхĕсене те пĕр пытармасăрах уçса пачĕ. Больницăра кадрсен ыйтăвĕ сивĕч. Тата 16 врач вырăнĕ пушă. Михаил Васильевич инфекци уйрăмĕнче, регистратурăра пулчĕ, ача çуратмалли уйрăм пулнă çурта тĕпрен юсакансем патне çитсе курчĕ, вĕсене Строитель кунĕпе саламларĕ.

Михаил Игнатьев çула май Калинин районĕн ветеринари аптекине тата «Магнит» универсама кĕрсе тухрĕ, вĕсенче ĕçлекенсемпе тата товар туянакансемпе ăш пиллĕн калаçрĕ.

Социализм Ĕçĕн Геройĕ Иван Никифоров ячĕллĕ пĕрремĕш вăтам шкулта иртнĕ тĕл пулура калаçу, тĕпрен илсен, кăçалхи вĕренӳ çулне кĕтсе илме мĕнле хатĕрленнипе, çитес çул Раççейре иртекен – Литература, Чăваш Енре иртекен Константин Иванов çулталăкĕсене паллă тăвассипе çыхăннă мероприятисем тавра пычĕ. Шкул директорĕ Елена Григорьева хаклă хăнана педагогсен паянхи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен хавхаланса каласа пачĕ.

Иртнĕ эрне кун Вăрнар районĕн çул çыравне манăçми страница çырăннипе асра юлĕ. Çав кун район центрĕнче «Кристалл» катока уçрĕç. Вăрнарсем савăнăç-телейне вĕсемпе пĕрле пайлама республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата унпа пĕрле килнĕ официаллă çынсем кăмăл турĕç. 315 миллион тенкĕ тăракан капмар та хитре Спорт керменне Физкультурник тата Строитель кунĕсем умĕн уçни пĕлтерĕшлĕ: икĕ уявĕ те кун-çул тăнăçлăхне, ырлăх-тивлетне, пирĕн пĕтĕм ăнăçусем сывă пурнăç йĕркинчен килнине палăртса тăмаççĕ-и вара?

Пирĕн республикăри яллă районсенче хальлĕхе Вăрнарта кăна çакăн пек каток пур. Республика ертӳлĕхĕ асăннă районта кунашкал пысăк объект çĕклеме май туса пани – Вăрнар тăрăхĕнче пурăнакан çынсен, çав шутра кунти спортсменсен ĕçне тивĕçлипе хаклани.

Спорт керменне уçнă вăхăтра çумăр çума тытăнчĕ, анчах уява килнĕ çынсем саланма васкамарĕç. «Вăрнарта çумăр çăвать пулсассăн та пирĕн чĕресенче паян хĕвел шевли çиçет», – терĕç вĕсем.

Михаил Игнатьевăн ĕçлĕ çул çӳревĕ район администрацийĕн ларусен залĕнче районăн социаллă пурнăçĕпе экономикине аталантарассипе çыхăннă ыйтусемпе ирттернĕ канашлупа вĕçленчĕ. Ун ĕçне вице-премьер-ЧР ял хуçалăх министрĕн Сергей Павлов, ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕн çумĕ Татьяна Богданова, ЧР транспортпа çул-йĕр хуçалăх министрĕн çумĕ Владимир Степанов, ЧР финанс министрĕн çумĕ Валерий Иванов, ЧР предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй Владимир Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Николай Маловпа Владимир Свешников хутшăнчĕç.

«Сирĕн патăрта усă курма резервсем çителĕклех, – пĕтĕмлетрĕ юлашкинчен Михаил Васильевич. – Пĕрпĕрне ăнланакан çынсене пĕрлештернĕ ушкăнран ытларах ĕç тăвасса кĕтетпĕр. Эпир сире хăвăр вăйпа татса пама май çитереймен ыйтусене пурнăçа кĕртес ĕçре пулăшма хатĕр. Районăн ӳсĕм-ситĕнĕвĕ куç умĕнчех, анчах эсир тата та çӳлерех çĕкленме тивĕç. Çак йыша пĕр шухăш-кăмăллă çынсене ытларах явăçтарма кăна тăрăшмалла».

■ Геннадий КУЗНЕЦОВ

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн УКАЗĔ

Чăваш Республикинче тавар рынокĕсен шайлашулăхне тивĕçтермелли мерăсем çинчен

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2015 çулхи çурла уйăхĕн 6-мĕшĕнче «Раççей Федерацийĕн хăрушсăрлăхне тивĕçтерес тĕллевпе ятарлă уйрăм экономика мерисемпе усă курасси çинчен» йышăннă 560-мĕш Указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем, федерацин ĕç тăвакан влаç органĕсен территори органĕсем, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, тавар туса кăларакансем, суту-илӳ тата ытти организаци пĕрпĕринпе ăнăçлă çыхăну тытассине йĕркелес тĕллевпе **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

1/ тавар рынокĕсен кулленхи мониторингне тата вĕсене тĕрĕслессине йĕркелемелле;

2/ Чăваш Республикинче апат-çимĕç рынокĕн конъюнктурин мониторингĕ тата унăн улшăнăвне еплерех йышăнас енĕпе оперативлă штаб йĕркелемелле;

3/ 2014 çулхи çурла уйăхĕн 25-мĕшĕччен Чăваш Республикинче тавар рынокĕсен шайлашулăхне тивĕçтерес енĕпе мерăсем хатĕрлесе çирĕплетмелле, унта çак ыйтусене пăхса хăвармалла:

суту-илӳ тытăмĕсенче Чăваш Республикинче тавар туса кăларакансен таварĕсемпе продукцине ытларах сĕнесси;

çĕр ĕç тата апат-çимĕç рынокĕсен инфратытăмне аталантарса çĕнетесси;

ял хуçалăх продукцийĕпе апат-çимĕç хакĕсен кулленхи мониторингне йĕркелесси;

инноваци технологийĕсемпе усă курса ял хуçалăх продукцине анлă тирпейлес енĕпе производство хăвачĕсене ӳстересси;

вырăнти чĕр тавар никĕсĕ çинче тирпейлекен предприятисем кăларакан, ютран кӳрсе килекен продукци номенклатурине анлăлатасси;

ютран кӳрсе килекен продукцие улăштаракан производство йĕркелеме вак тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсене пулăшасси.

2. Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министерствин федерацин ĕç тăвакан влаç органĕсен территори органĕсемпе пĕрле ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр таварпа апат-çимĕç хакĕсене сăлтавсăр ӳстернине хирĕç мерăсем йышăнмалла;

Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин суту-илӳ организацийĕсен, агропромышленноç комплексĕн тата товар туса кăларакан ытти организаци тӳрреминех çыхăну тытассине йĕркелемелле.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене хăйсен компетенцийĕпе килĕшӳллĕн çак Указа пурнăçлама кирлĕ мерăсене пурнăçлассине тивĕçтерме сĕнмелле. Товар рынокĕсен мониторингне ирттерессине, вĕсем еплерех пулнине тĕрĕслессине, Чăваш Республикинчи ял хуçалăхĕнче товар туса кăларакансем, çав шутра хушма хуçалăхсем кăларакан продукцие сутма условисем тăвассине йĕркелемелле.

4. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетленĕ кунран вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2014, çурла, 9, 113 №.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн *УКАЗĔ*

Чăваш Республикин спортсменĕсене 2016 çулта Рио-де-Жанейро хулинче /Бразили/ XXXI Олимп вăййисене тата çуллахи XV Паралимп вăййисене, çавăн пекех Пхенчхан хулинче /Корея Республики/ 2018 çулта хĕллехи XXIII Олимп вăййисене тата хĕллехи XII Паралимп вăййисене хутшăнма хатĕрлесси çинчен

2016 çулта Чăваш Республикин спортсменĕсене Рио-де-Жанейро хулинче /Бразили/ XXXI Олимп вăййисене тата çуллахи XV Паралимп вăййисене, çавăн пекех Пхенчхан хулинче /Корея Республики/ 2018 çулта хĕллехи XXIII Олимп вăййисене, хĕллехи XII Паралимп вăййисене хатĕрленме тата хутшăнма условисемпе тивĕçтерес тĕллевпе **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

2016 çулта Рио-де-Жанейро хулинче XXXI Олимп вăййисене, çуллахи XV Паралимп вăййисене, çавăн пекех 2018 çулта Пхенчхан хулинче /Корея Республики/ хĕллехи XXIII Олимп вăййисене тата хĕллехи XII Паралимп вăййисене /малалла – Олимп тата Паралимп вăййисем/ хутшăнма спортсменсене хатĕрлемешкĕн кирлĕ условисемпе тивĕçтерекен мерăсем йышăнса пурнăçа кĕртмелле;

спортсменсене Олимп тата Паралимп вăййисене хатĕрленме кирлĕ укçа-тенкĕпе пурлăха вăхăтра уйăрассине тивĕçтермелле.

2. Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене халăха анлăн явăçтарса физкультурăпа спорта аталантарма, Олимп тата Паралимп вăййисене Чăваш Республикин спортсменĕсене хутшăнма кирлĕ условисем туса парас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма сĕнес.

3. Çак Указ ăна официаллă майпа пичетленĕ кунран вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2014, çурла, 11, 116 №.

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи çурла уйăхĕн 11-мĕшĕнче кăларнă 117-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн театр искусствинчи çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Чăваш патшалăх сăнав драма театрĕ» автономи учрежденийĕн артисткине **Инна Руфовна СМИРНОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ АРТИСЧĔ»** ят панă;

культурăри çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш ял тăрăхĕнчи «Енĕш Нăрвашри информацип культура центрĕ» культурăн муниципалитет бюджет учрежденийĕн Енĕш Нăрвашри историпе мемориал музейĕн ертӳçине **Владимир Васильевич ПЕТРОВА,** Çĕмĕрле районĕнчи Тăванкасси ял тăрăхĕнчи «Тăванкасси культурăпа сывлăха çирĕплетекен центр» культурăн муниципалитет бюджет учрежденийĕн директорне **Михаил Яковлевич ТИХОНОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

педагогикăри тата воспитани енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн, нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Канашри транспортпа энергетика техникумĕ» вăтам профессионал пĕлĕвĕн автономи учрежденийĕн директорне **Ильсур Ринатович НАЗМУТДИНОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĔРЕНТĔВĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»,** Тутарстан Республикинчи вăтам профессионал пĕлĕвĕн «Теччĕ педагогика колледжĕ» патшалăх автономи пĕлӳ учрежденийĕн музыка преподавательне **Маргарита Анатольевна АДАЙКИНĂНА,** Красноармейски районĕнчи муниципалитетăн пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан «Упири пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» бюджет учрежденийĕн учительне **Иван Петрович МАТВЕЕВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВĔРЕНТЕКЕНĔ»** хисеплĕ ятсем панă;

промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи «Г.А.Ильенко ячĕллĕ «ЭЛАРА» ăслăлăх-производство комплексĕ» акционерсен уçă обществин техника директорĕн çумне **Рикс Мефодьевич ВАСИЛЬЕВА,** Шупашкар хулинчи «Текстильмаш» акционерсен уçă обществин механикăпа сборка производствин слесарьне **Александр Спиридонович ХОХЛОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННĂÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн, нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Муркаш районĕнчи «Пурăнмалли çурт-йĕрĕн управляющи компанийĕ» тулли мар яваплă обществăн генеральнăй директорне **Николай Валентинович ЛЮБИМОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХ ЫЙТĂВĔСЕНЕ ТИВĔÇТЕРЕС ĔÇЕН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă.

«Атăл - Янцзы»: палăртни пурнăçланĕ

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин Раççей Федерацийĕн Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн Михаил Бабичăн Тав çырăвне тивĕçнĕ. Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров премьера çак ятпа ăшшăн саламланă.

Асăннă награда Иван Борисовича Раççейпе Китай хушшинчи экономика çыхăнăвне аталантарма пулăшакан «Атăл - Янцзы» форматăн пĕрлехи ĕç ушкăнне пысăк тӳпе хывнăшăн панă. Республика Правительстви çине тăнипе Чăваш Енпе Китай провинцийĕсен хушшинчи çыхăнăвăн пĕрлехи инвестици проекчĕсемпе ял хуçалăхĕ, энергетика, туризм, культура тата вĕренӳ сферисенче килĕштерсе ĕçлессине йĕркелеме май килнĕ. Награда илнĕ хыççăн Иван Моторин Раççей Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич ертсе пыракан «Атăл - Янцзы» ĕç ушкăнĕн планĕнче палăртнисем пĕтĕмпех тата туллин пурнăçланассине пĕлтернĕ.

А.СТЕПНОВ.

Ыйту-хурав

Ирĕк илмелле-и?

60 çул каялла лартнă çуртра пурăннă май ăна тĕпрен юсама шухăшлатпăр, виçĕ пӳлĕмрен тăваттă тăвас тетпĕр, унсăр пуçне тепĕр кăмака лартасшăн, никĕс ярса веранда çĕклесшĕн. Çакăн валли ятарлă ирĕк илмелле-и?

П.ДАНИЛОВ.

Паллах, çак ыйтăва вырăнти администрацире татса памалла.

РФ Хула строительствин кодексĕн 51 статйипе килĕшӳллĕн эсир палăртни тĕп юсав ĕçĕ шутланмасть, реконструкцилени пулса тăрать. Капиталлă строительство объекчĕсене хăвăр тĕллĕн çĕнетсе улăштарма юрамасть, çакна валли ирĕк илмелле.

Страховка укçи

Эпĕ пĕр банкăн виçĕ филиалĕнче 300-шер пин тенкĕлĕх депозит уçнă. Кредит учрежденийĕ панкрута тухас пулсан страховка укçине мĕнле суммăшăн тивĕçетĕп?

З.СТЕПАНОВА.

Пĕр кредит учрежденийĕн темиçе филиалĕнче /уйрăмĕнче/ упранакан укçа-тенкĕ çав банкăн вклачĕ шутланать. Çавна май вĕсене саплаштармалли пĕрлехи йĕрке вăйра тăрать: банкра упранакан 700 пин тенкĕрен иртмен суммăн 100 процентне тавăрса параççĕ.

«Еткерпе» куçнă кредит

Атте вилнĕ хыççăн пурлăхпа пĕрле вăл парса татман кредит та мана куçрĕ. Банк парăма саплаштарма ыйтать. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх – атте кредит илнĕ чухне поручителе çирĕплетнĕ. Кредитшăн вăл яваплă пек туйăнать.

И.ПЕТРОВА.

Сирĕн аçăран кредит килĕшĕвне тĕплĕн тишкерме тивет, мĕншĕн тесен унта парăма тавăрмалли условисене уйрăммăн палăртма пултарнă. Енчен те поручитель çав укçана уйрăм çыншăн /аçăршăн/ саплаштарма тивĕç тесе йышăннă тăк вкладчик вилсен поручительлĕх обязательстви вăйне çухатать.

Килĕшӳре поручитель еткерлĕхе йышăнакан тĕлĕшпе те обязательствăна пурнăçлама шантарнă тăк поручительлĕх вилнĕ çыннăн еткерçи çав парăма татичченех вăйра тăрать. Урăхла каласан тĕслĕхĕр иккĕмĕш вариантпа çыхăннă – кредита сирĕн саплаштармалла. Суд йышăнăвĕпе ăна тӳлеме пултарайманнине çирĕплетсен кăна банк поручительтен ыйтма тивĕç.

Налук – 20,8 млрд тенкĕ ытла

Кăçалхи кăрлач-утă уйăхĕсенче Чăваш Енре мĕн пур шайри бюджетсене 20,8 млрд тенкĕ ытла налук хывнă. Пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан – 106,8%.

Тӳлевсен тытăмĕнче хушма хакран илекен налук тӳпи – 30,8, уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налукăн – 27,5, усламран илекен налукăн – 17,2, пурлăхшăн тӳлекеннин – 11,3, акцизсем – 5,3%.

Федераци бюджетне 7 млрд тенке яхăн хывнă – пĕлтĕрхи çичĕ уйăхрин 113,7%. Территори бюджетне кĕнĕ укçа 13,8 млрд тенкĕпе танлашнă – ӳсĕм 3,6%. Çав шутра республика бюджечĕн тӳпи – 11 млрд тенке яхăн, çакă та иртнĕ çулхи кăрлач-утă уйăхĕсенчи кăтартуран 7,7% пысăкрах.

К.НИКОЛАЕВ.

Çырăнма – йытăпа

«Çурла уйăхĕнче пĕрлешсен ĕмĕрĕпех юратуллă пурăнан», – теççĕ халăхра. Çавна шута илсе-ши çурла уйăхĕн 7-мĕшĕнче эрне варрине пăхмасăрах Çĕнĕ Шупашкарти Мăшăрлану керменĕнче халăх питĕ йышлă пулнă.

Çак кун пурĕ 24 çĕнĕ çемье чăмăртаннă. Çав йышра кăçалхи 600-мĕш мăшăр та пулнă. Вĕсем – Анна Березинăпа Антон Воронов. Антон ачасен 1-мĕш спорт шкулĕнче конькипе чупас енĕпе тренерта вăй хурать, Анна банкра ĕçлет. Хăйсем 600-мĕш пулни çамрăк мăшăршăн савăнăçлă кĕтменлĕх пулнă.

Çырăннă çĕре Антонпа Анна Жастин ятлă юратнă йыттине те илсе кайнă. Вăл туйра «тĕп хĕр çумĕ» пулнă. Мăшăрланнă вăхăтра ăна пĕркенчĕк айĕнчи хĕр аллинчех тытнă. ЗАГС ĕçченĕсем çамрăксене килĕшӳпе çураçу, юратупа вăрăм ĕмĕр суннă.

Р.ВОЛЬСКАЯ.

Лару

Йăлтах пуçарулăхран килет

Ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе ЧР Правительствин АПК, мониторинг тата апат-çимĕç рынокĕнче лару-тăру улшăннине хăвăрт хаклакан ыйтусемпе ĕçлекен комисси тата ЧР Пуçлăхĕ çумĕнчи Экономика канашĕн пĕрлехи ларăвĕ иртрĕ. Пухăннисем РФ Президенчĕ Владимир Путин 2014 çулхи çурлан 6-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕн хăрушсăрлăхне тивĕçтерес тĕллевпе ятарлă уйрăм экономика мерисемпе усă курасси çинчен» Указне, РФ Правительствин 2014 çулхи çурлан 7-мĕшĕнчи йышăнăвне пурнăçлама ЧР территорийĕнче палăртакан мерăсем çинчен калаçрĕç.

РФ Президенчĕ В.В.Путин Указĕпе килĕшӳллĕн Раççее хирĕç санкцисем йышăннă çĕр-шывсенчен ял хуçалăх продукцийĕ, апат-çимĕç, ытти хăшпĕр товар – пурĕ 40 тĕрлĕ – кӳрсе килессине çулталăкăха чарса лартнă.

– Продукци туса илекенсен, ăна тирпейлекенсен тата сутакансен çавна май яваплăха туйса тăмалла. Санкцисем пурне те пырса тивеççĕ. Хамăр туса илекен çимĕçе кунтах вырнаçтармалла. Вăл экологи енчен таса, шанчăклă. Тавар туса илекене те, потребителе те хӳтĕлемелле. Продукцие саккунсăр хаклатма, спекуляци тума никамăн та ирĕк çук. Ас тăватăр пулĕ, пĕр вăхăт хура тул кĕрпин килограмне çĕр тенкĕ майлах хаклатса янăччĕ. Малашне апла пулмĕ. Ял хуçалăхĕнче вăй хуракансен пушă тăракан управсене арендăна илмелле. Пухса кĕртнĕ çимĕçе вĕсене тултармалла. Республикăра апат-çимĕç хăрушсăрлăхне туса хумалла, – терĕ Михаил Васильевич ларăва уçнă май. Республика малашне епле аталанасси, халăхăн пурнăçĕ хăш шайра пуласси йăлтах хамăрăн пуçарулăхран килнине палăртрĕ.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов республикăра апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕ туса хума майсем пурри çинче чарăнса тăчĕ. Çулталăкра кашни çынна медицина çирĕплетнĕ виçерен ытларах çимĕç туса илетпĕр. Çĕр улми 3 хута яхăн нумайрах та. Сĕт те хамăра çителĕклĕ. Аш-какай кăштах йывăртарах. Уйрăмах – ĕне ашĕ, вăл нормăпа палăртнине чылай çитмест.

Чăх-чĕп хăвăрт çитĕнет. «Юрма» агрохолдингра, «Акашевская» кайăк-кĕшĕк фабрикинче производство хăватне ӳстерме майсем пур. Сысна ашĕ туса илессипе Шупашкар районĕнчи «Прогресс» АХО аван ĕçлет. Кăçал производствăна 2,5 пин тонна какай туса илмелĕх сарнă. Малашне вăл 11 пин тонна паха аш туса илме тытăнĕ.

– 2015 çул тĕлне ку енĕпе çитменлĕх пулмалла мар, ыйту татăлмалла, – каласăва хутшăнчĕ Михаил Игнатьев.

Сергей Владимирович текех 41 çĕр-шывран апат-çимĕç туянмалла маррине пĕлтерчĕ. Хамăр патăмăртах ял хуçалăхне тĕллевлĕн аталантарма май пур. СССР чухне Шупашкарти аш-какай комбиначĕ республикăра чи вăйлисенчен пĕри пулнă. Халĕ Вăрнарти тулли хăватпа /100% ытлашшипех/ ĕçлет. Ларура Шупашкартине тепĕр хут ĕçе кĕртес шухăш пуррине палăртрĕç.

Управ тăвакансене патшалăх 30% субсиди парса пулăшать. Çĕр улмине ана çинчен сутма чарăнмалла. Ăна управсене тултармалла. Ытлашшине çуркунне пысăкрах хакпа вырнаçтарма май килĕ.

Суту-илӳре виççĕмĕш çын – килĕштерекен, çураçтаракан – пулмалла маррине те палăртрĕç. Вĕсене пулах ял çынни юлашки вăхăтра сĕтĕн кашни литрне 10-11 тенкĕпе те сутать. Республика Пуçлăхĕ урăхларах майсем шырамаллине, ярмăрккасем, суту-илӳ вырăнĕсем ытларах йĕркелемеллине асăнчĕ.

«Сĕт калăпăшĕ чаксан тирпейлекенсен те ĕçĕ сахалланать, çакă шалăва та витĕм кӳрет. Мĕншĕн çакна ăнланасшăн мар-ха вĕсем? Темиçе çул каялла çеç-ха кивĕ автомашинăсемпе çӳретчĕç. Халĕ – чаплисемпе», – терĕ вăл.

Калаçу пăсăлнă çимĕçе чееленсе вырнаçтарни пирки те пычĕ. Чăх ашне пĕр вăхăт Белгородран кӳрсе килнĕ. Кунта миçе талăк килет вăл, сентре çине хăçан тухать – вăхăчĕ, паллах, самаях иртет. Апла пулин те кăштах йӳнетеççĕ те пите хĕретмесĕрех сутаççĕ. «Ой, йӳнĕ-ха ку», – тесе пенсионерсем савăнсах туянаççĕ.

– Унашкал тĕслĕхпе эпĕ те тĕл пултăм, – терĕ ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов. – Арăм чăх какайĕ туяннă. Тирпейленĕ кунĕ вара – ыранхи. Мĕнле ăнланмалла? Срокне çĕнĕрен палăртнă та – вăхăчĕ çитмесĕрех сутма тытăннă. Манса кайнă ĕнтĕ ун çинчен. Халăха куç умĕнчех улталаççĕ.

ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Инна Антонова апат-çимĕç хакĕсен инфляцийĕ епле йĕркеленнипе паллаштарчĕ, цифра нумай илсе кăтартрĕ. Кăçал, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, чылай çимĕçĕн хакĕ хăпарнă. Çурла-авăн уйăхĕсенче, сезон вăхăтĕнче, пахча çимĕç хакĕ чакать. Çавăнпа та çителĕклĕ туянса хĕл кaçмалăх саппас хатĕрлемеллех. Хак епле йĕркеленесси продукци калăпăшĕнчен килет. Вăл ытлă-çитлĕ пулсан, паллах, йӳнелет. Ăна сутасси пахалăхĕнчен, тасалăхĕнчен, тавара епле чĕркенинчен нумай килет.

Михаил Игнатьев юлашки вăхăтра районсенче ĕçлĕ çул çӳревре пулчĕ, лавккасене кĕрсе курчĕ. Шел те, хамăрăн тавар сентре çинче питĕ сахал. Ютран килекенни илемлĕрех-мĕн. Сутуçăсемшĕн пĕрех – хăвăртрах вырнаçтарса пултăр та кĕсьене укçа ытларах кĕтĕр. Чăваш продукцине сутассишĕн хыпăнсах çунни курăнмасть.

Тивĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçламан сутуçăсем пытанма ăста иккен. Е ăçта та пулин кайнă е чирлесе ĕçе тухман. «Вăрнарта тăпăрча ăçтан кӳрсе килнине никам та ăнлантараймарĕ. Вулама май çук вĕтĕ çырнă, – терĕ республика Пуçлăхĕ. – Урамра автомашина çинчен сутăнакан кашни таварăн сертификат пулмалла».

Унтан алкоголь продукцийĕ пирки аса илчĕ. Чăваш эрехĕ кăçал сахал сутăннипе кăмăлсăр пулнине палăртрĕ. «Акцизсен калăпăшĕ чакнипе 300 млн тенкĕ çухатрăмăр, – терĕ. – Унпа икĕ лайăх ача сачĕ тума пулатчĕ».

Владимир Путин Указне сӳтсе явма чылайăн хутшăнчĕç. Хăшĕ-пĕрин шухăшĕпе паллашар-ха.

Вадим Николаев, «Чăваш бройлерĕ», АУО директорĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ:

– Владимир Владимирович шухăшĕпе тĕпренех килĕшетĕп. Эпир хамăра тăрантарма пултаратпăр, производствăна ӳстерме майсем пур. Шел те, Перекет банкĕ пире ăнланасшăн мар. Кредит илейместпĕр.

Тухăçлă ĕçлес, продукцие йӳнетес тĕллевпе тĕрлĕ меслет шыратпăр. Хамăр патăмăртах тырă туса илетпĕр. Кăтартусем кăçал та япăх мар.

Евгения Беликова, «Ольдеевская» агрофирма» АХО директорсен канашĕн председателĕ:

– Питĕ тĕрĕс шухăш. Ял хуçалăха аталантарассишĕн çине тăмаллах пирĕн. Паллах, çакă йăлтах хамăртан, пуçаруллă та тăрăшуллă ĕçрен килет. Ку чухнехи технологисене пурнăçа кĕрт, аталан. Çулталăкра кашни ĕнерен 8 пин литртан кая мар сĕт суса илмелле, гектартан 40-45 центнертан кая мар тĕш тырă туса илмелле. Шел, ăста специалистсем çук. Пире те çитмеççĕ вĕсем. Вăранма вăхăт. Ĕçе тытăнакан çамрăксене пулăшмалла. Чылайăшĕ диплом илсен хăйĕн тивĕçне, ял хуçалăхне çĕклессишĕн тăрăшмалли çинчен темшĕн манать.

Петр Ивантаев, АПК ветеранĕ:

– Шел те, сад ăстисен юлташлăхĕсем çинчен пĕр сăмах та илтмерĕм. Унччен вĕсене пулăшнă. Халĕ чылайăшĕ çум курăк айне пулнă, çулсем ванса пĕтнĕ, транспорт унта пыраймасть. Юлташлăхсене çĕнĕрен чĕртмеллех. Вĕсем ял хуçалăхне улмасырла, пахча çимĕç туса илсе пысăк витĕм кӳрĕччĕç.

■ Валентин ГРИГОРЬЕВ

Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ

«Экватор» – хыçра

Культура çулталăкĕн çурри питĕ хăвăрт иртсе кайрĕ. Вăл паллă пулăмсемпе асра юлчĕ. Хăшĕсем-ха вĕсем? Культура çулталăкне савăнăçлă лару-тăрура уçни, Раççей халăх артистки Надежда Бабкина ертсе пыракан «Раççей юрри» фестиваль-марафон, Шупашкарти Пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль, халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм Раççейри «Раççей çăл куçĕсем» фестиваль тата ытти те.

Кусем – Раççей тата республика шайĕпе йĕркеленĕ мероприятисем. Унсăр пуçне муниципалитет тытăмĕпе тата учрежденисемпе организацисен вăйăпе иртернĕ ĕçсем çĕр-çĕр.

Отрасльти учрежденисем çак тапхăрта бюджет тулашĕнчи çăл куçсенчен 51,3 млн тенкĕ тупăш илнĕ.

Театрсемпе концерт организацийĕсем çĕнĕ 23 спектакльпе, концерт программипе пуянланнă, билет сутмалли плана 132 процент пурнăçланă. 1272 мероприяти вырăнне 1449 иртернĕ. Вĕсене 318,5 пин çын пырса курнă.

Культура çулталăкĕнче Чăваш патшалăх культурăпа искусство институтĕнчен тата вăтам пĕлӳ паракан ятарлă виçĕ вĕренӳ заведенийĕнчен 228 çамрăк специалист вĕренсе тухнă. Институт ĕçченĕсем пĕлтернĕ тăрăх – «Халăх ӳнер пултарулăхĕ» специальнăçпа пĕлӳ илнĕ 24 хĕрпе каччă ĕçе вырнаçнă ĕнтĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ ялсенчи культура учрежденийĕсене суйласа илнĕ. Сăмахран, Куславкка районĕнчи Куснарти информацине культура центрĕнче халăх фольклор ансамбльне çамрăк специалист ертсе пыма пуçлĕ.

Шупашкарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищинче «Инструментпа каласси» специальноçпа пĕлӳ илнĕ 5 музыкант та ĕçе вырнаçнă. Шел те, тăван хутлăха каялла таврăнман çамрăксем те чылай.

Культура çулталăкĕнче республикăри музейсем ăнăçлă ĕçлеççĕ, вĕсем 470 мероприяти йĕркеленĕ, 2,1 пин экскурси ирттернĕ, 540 лекци вуланă. Библиотекăсем те ĕçсĕр ларман, вĕсен 950 пысăк мероприятине 60 пин çын хутшăннă.

Музейре – туй

Ватăсем каланă тăрăх, туя мĕнле ирттерен – мăшăрăн кун-çулĕ те çапла килсе тухать. Çак савăнăçлă самант пулас телейлĕ пурнăçăн никĕсĕ-мĕн. Çавăнпа та çемье çавăрнă куна пурте асра юлмалла ирттерме тăрăшаççĕ.

Елчĕк районĕнчи çамрăк мăшăрсем районти историпе тавра пĕлӳ халăх музейĕнче туй тума шухăш тытни ăнсăртран мар пулĕ. Паянхи ăру аваллăхпа тытакан çыхăнăва татассăн мар.

Акă çак кунсенче Хăвăлçырмари Маринăпа Александр Казаковсем те хăйсен пурнăçĕнчи телейлĕ саманта музейре паллă тума йышăннă. Унта ĕçлекенсем вĕсем валли ятарлă программа хатĕрленĕ. Вăл тĕрлĕ сюжетран тăнă: çамрăксене çăкăрпа-тăварпа тата пылпа сăрапа кĕтсе илни; хăмлапа, тырăпа пуç çийĕн сапни; чăваш тумĕпе сăн ӳкерĕнни; çамрăк кине тĕрĕ тĕрлеттерни тата авалхи станокпа пир тĕрттерни; пасарта кин валли çăпата туянни; утă купи ăшĕнче «Телей таканне» шырани тата ытти те.

Маринăпа Александр шухăшĕпе – туй кунĕнче музейре пулни вĕсен çемье пурнăçне ырă самант парнеленĕ.

Çу кунĕнчи кĕнеке сукмакĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнче Культура çулталăкĕнче тĕллевлĕ мероприятисем ирттереççĕ. Кану вăхăтĕнче те хулари «Çемье вулавĕ» библиотекăра ачасемшĕн усăллă куравсем йĕркелеççĕ. Сăмахран, библиотекăн ача-пăча пайĕнче çитĕнекен ăрăва каникул вăхăтĕнче кирлĕ литература вулама сĕнекен «Класс тулашĕнчи вулав» выставка хатĕрленĕ. Вăл икĕ пайран тăрать. «Кĕнеке страници çинчи хĕвел» пайра шăпăрлансем тĕрлĕ енлĕ литературăпа – вырăс тата чикĕ леш енчи классиксен произведенийĕсемпе, бестселлерсемпе, фантастикăпа тата ытти те – паллашма пултараççĕ. «Çу кунĕнчи кĕнеке сукмакĕпе» пайра шкул программипе вуламалли литература вырăн тупнă.

Кевер юбилярсем

Кевер /бриллиант/ – çирĕплĕх, питĕлĕх палли, çавăнпа та кевер туй çинчен каласнă чухне çемье телейĕн тĕреклĕхĕ пирки шухăшлатăн. 60 çул пĕр сукмакпа утакан мăшăрсем чăннипех пĕр-пĕрне юратса, ăнланса пурăнаççĕ. Çакă вĕсене вăй-хал, тӳсĕм парать.

Муркаш районĕнчи Катикасси ял тăрăхĕнчи Аполинария Николаевнăпа Василий Григорьевич Григорьевсен çемйинче Культура çулталăкĕнче савăнăçлă самант пулчĕ: вĕсем çемье çавăрнăранпа кăçалхи çурла уйăхĕн 5-мĕшĕнче шăпах 60 çул çитрĕ. Паллă пулăмпа вĕсене асăннă ял тăрăхĕн специалисчĕ А.В.Григорьева, ветерансен канашĕн председателĕ В.Н.Волкова, ытти сем саламларĕç, парнесемпе чысларĕç. «Çăл куç» фольклор ансамблĕ юрăкĕвĕпе савăнтарчĕ.

Григорьевсем икĕ ача çуратса ӳстернĕ, вĕсен халĕ тăватă мăнук. Мăнукĕсен тата тăватă ача çитĕнет.

Ĕмĕр иртет – манăçмасть

Чăваш наци музейĕ Пĕрремĕш тĕнче вăрçине халлланă мероприятисен ярăмне малалла тăсать. Шел те, асăннă вăрçăн историйĕ пĕтĕмпех уçăмлă мар-ха. Çăл куçсем туллин упранса юлайман, мĕншĕн тесен тĕнче вăрçи хыççăнах революци пулнă, граждан вăрçи иртнĕ. Хальхи курав «Тĕнче вăрçи çулĕсенчи Чăваш Ен медикĕсем» ятлă. Вăл Врачсен пĕлĕвне ӳстерекен институтра уçăлчĕ.

Курав пирĕн тăрăхра çуралса ӳснĕ медиксен çарти кун-çулĕ пирки. Документсене ЧР патшалăх истори архивĕнчен, Раççей патшалăх çар истори архивĕнчен, Чăваш наци музейĕнчен, ытти çĕртен илнĕ. Экспозицин пысăк пайĕпе Врачсен пĕлĕвне ӳстерекен институтăн профессорĕ, медицина ăслăлăхĕсен докторĕ, медицина историкĕ Григорий Алексеев тивĕçтернĕ.

Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.

Ахрăм

В.Руссов çемйи çинченех

«Хыпар» хаçатăн утă уйăхĕн 22-мĕшĕнчи номерĕнче Вăрмар поселокĕнче пурăнакан Г.Матвеевăн «Паттăрсене манмастпăр» статйи пичетленчĕ. Унта Вăрмар районĕнчи Пăвакасси ялĕнчен Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине кайнă Василий Руссов коммунистăн дневникĕ çинчен сырнă. Вăл яла таврăнайман. Стрелоксен ротин командирĕ 1942 çулта Ржев çывăхĕнчи хаяр çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе пуç хунă.

Статьяра «Вăрçа кайиччен вăл калавсем сырнă, ватă çынсем каланисене çыра-çыра илнĕ. Хăш-пĕр хучĕсене аслă хĕрĕ Антонина Пермь крайĕнчен Пăвакассинче пурăнакан йăмăкне Тамарăна ярса панă», – тени пур.

Манăн атте, Павел Михайлов, 1896 çулта çуралнă. Патша, граждан, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çулĕсемпе утса тухнă. 91 çула кайса 1986 çулта çĕре кĕчĕ. Граждан вăрçинче ултă хут аманнă пулин те тĕреклĕччĕ. Ситмĕлмĕш çулсенче мана вăл «Вăтăрмĕш çулсенче пирĕн ялта учительте ĕçленĕ Руссов ман пата килсе граждан вăрçи çинчен пĕр хулăн тетрадь çырса илчĕ», – тесе темиçе хут та каланă. Çак статья хыççăн эпĕ атте сăмахĕсене аса илсе тепĕр кун Пăвакассине çитрĕм. Çав тетраде тупас шухăш канăç памарĕ. Ял çыннисенчен ыйтса Руссовсен çуртне тупрăм. Хапхине питĕрмен. Пахчари хăмла çырли аврисен хушшинчен вашават хĕрарăм тухрĕ. Каласма юратаканскер. Хампа паллаштартăм, мĕн ыйтупа килнине пĕлтертĕм, хаçатне те кăтартрăм. Тамара Васильевна хыпăнса ӳкрĕ, пӳрте кĕме чĕнчĕ. Мăшăрне чей лартса яма хушрĕ. Унăн аппăшĕпе, Кларăпа, виçĕ çул пĕр класра вĕреннине пĕлтертĕм.

Тамара ашшĕн хучĕсене сĕтел çине кăларса хучĕ, анчах питех те сахал. Пурĕ те икĕ листа, дневникрен çурса илнĕскерсем. Тата 6 çулта вилнĕ аслă хĕрĕ Лида çинчен çырнă калав. 8 пысăк хут листи çинче. Почеркĕ вĕтĕ, хитре. Вĕреннĕ çын çырни курăнать. «Атте çырнисем пирĕн пĕр арчаччĕ, анчах эпир вĕсене упрама пĕлмен, çурса, çунтарса пĕтернĕ. Уншăн кайран мĕн чухлĕ ӳкĕнмен пулĕ», – терĕ Тамара.

Василий Иванович 1914 çулта çак ялтах çуралнă, тăлăх ӳснĕ. Ашшĕ – 1915, амăшĕ – 1919 çулта, ăна пăхса пурăннă тăванĕ Христофор Павлов 1931 çулта вилнĕ. Василий пĕлӳ илме тăрăшнă. 1928 çулта ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухсан виçĕ çухрăмри Кавал шкулне виçĕ çул çӳренĕ. 1931 çулта Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен 6 уйăхлăх курсран вĕренсе тухнă та хамăр районти Çиçтепе, Кивĕ Вĕренер ялĕсенче пуçламăш шкулсенче ĕçленĕ. Комсомола – 1932, парти ретне 1939 çулта кĕнĕ. Вăрçă умĕн комсомол райкомĕнче секретарьте ĕçленĕ. Малтанхи кунсенчех вăрçа кайнă, арăмĕ виçĕ ачапа юлнă. Килте пĕр пăт тырă та пулман.

Пăвакасси, Кивĕ Вĕренер ачисем 4 класс хыççăн Кавалта вĕреннĕ. Унта патша вăрçи вăхăтĕнче тыткăна илнĕ нимĕçсем тунă икĕ хутлă кирпĕч шкул пулнă. Вăл – ял хĕрринче. Кавал, юнашар ял ачисем паян та унтах вĕренеççĕ. Паллă нумай çын тухнă çак шкултан.

Эпир Клара Руссовăпа 1951-1953 çулсенче пĕр класра вĕрентĕмĕр. Вăл ман умра пĕр парта урлă Роза Матвеевăпа пĕрле ларатчĕ. Иккĕшĕ те класра чи лайăх вĕренекенсемччĕ. Эпĕ саккăрмĕш класа 150 тенкĕ тӳлемелле пулнăран кайман. Ман салтак хĕсмечĕ хыççăн малалла вĕренме май килчĕ. Кларăпа Роза ашшĕсем вăрçăра вилнĕрен тӳлевсĕр вĕренсе 10 класс пĕтерчĕç. Кайран вĕсем, Тамара каланă тăрăх, Шупашкарта бухгалтерсен курсне, планпа экономика техникумне вĕренсе пĕтернĕ. Роза вырăс çыннипе пĕрлешсе Тюменьре пурăннă.

Клара кӳршĕри Çиçтепе ялĕнче çуралнă Юрий Михеева 1961 çулта кайса тухнă. 1962-1966 çулсенче 3 ача, икĕ хĕрпе пĕр ывăл, çуратнă, Шупашкарта пурăннă. 1975 çулта усал упăшкинчен тарса виçĕ ачипе 1937 çулта çуралнă аппăшĕ патне Пермь крайне /ун чухне – облаç/ кайнă. Унта ĕçленĕ, офицерпа пĕрлешнĕ. Лешĕ майор званипе пенсие тухсан Шупашкара куçса килнĕ. Кунта вĕсене çар комиссариачĕ виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер панă, анчах лăпкă пурăнма май килмен. Малтанхи упăшки йĕрлесе çӳреме, хăратма пуçланă. Çавăнпа хваттере улăштарса Мускав облаçĕнчи Раменское хулине куçса кайнă, халĕ унтах пурăнаççĕ. Кларăпа телефонпа сыхăнса калаçрăм. Вăл халь телейлĕ. Ачисем хăйсен çемйисемпе тĕрлĕ çĕрте тĕпленнĕ, мăнукĕсем йышлă.

Клара ашшĕ çырнă хутсем пирки çапла пĕлтерчĕ: «Сирĕн ял /Кивĕ Вĕренер/ çынни, Китай чĕлхине вĕренекенни, атте çырнă хутсене, тетрадьсене пырса илсе кайнăччĕ, вĕсем унра пулмалла».

Эпир Кавалта вĕреннĕ вăхăтра пирĕн ялти Александр Андреев /Энтюк Санькки/, вăрçăран килсен счетоводра ĕçленĕскер, Кавала 10 класа çӳреме пуçларĕ. Вĕренсе тухсан Мускавра ют чĕлхесен институтне пĕтерчĕ те Китайри посольствăра ĕçлерĕ. Вăл унтах çемье çавăрчĕ. Çитмĕлмĕш çулсенче Китайпа харкашу пуçлансан Чита хулине куçрĕ. Тивĕçлĕ канăва тухсан Шупашкара таврăнчĕ. 34 çул каялла вилчĕ. Вăл В.Руссов хучĕсене илсе кайни 60 çул ытла. Вăрçăран сывă таврăннă тăк пысăк çитĕнӳ тумалли çын пулнă Руссов, литература туртăмĕ пысăккине аслă хĕрĕ Лида вилсен çырнă калавĕ те аван çирĕплетет.

Руссовсен тĕп килĕнче халĕ вĕсен кĕçĕн хĕрĕ мăшăрĕпе пурăнать. Вăл Шупашкарта ЧЭАЗра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухсан амăшне Вера Севастьяновнăна пăхма куçса килнĕ. Амăшĕ 95 çула çитсе 2007 çулта вилнĕ. Ялти пӳрте газ кĕртнĕ, пахчапа туллин усă кураççĕ, ачипе мăнукĕсем савăнтараççĕ.

■ **Николай МИХАЙЛОВ.**
Вăрмар районĕ

Паллашăр: «Савнă Шупашкарăм»

Тĕп хулари хальхи искусство центрĕнче Чăваш Художникĕсен союзĕн «Савнă Шупашкарăм» куравĕ уçăлнă. Ăна Хула кунне халлланă. Вăл çулсеренех иртет, куракана кашнинчех çĕнĕ ĕçсемпе савăнтарать.

Мероприятие хальхи искусство центрĕн пай пуçлăхĕ В.Бамбурин салам сăмахĕпе уçнă, сăрă ăстисене пуçаруллă та хастар пулнăшăн тав тунă. «Хулашăн пĕлтерĕшлĕ çак куравра художниксен ĕçĕсемпе кăна мар, хăйсемпе те паллашма май пурри аван», – тенĕ. Чăваш Художникĕсен союзĕн председателĕ В.Федоров мастерсене союз епле ĕçленине туллин кăтартса панăшăн мухтанă. Асăннă куравра тăтăшах çĕнĕ талантсем çуралаççĕ. Сăмахран, кăçал А.Зимина, Е.Борзова, С.Воронков палăрнă. В.Федоров палăртнă тăрăх – выставкăна тĕрлĕ содержаниллĕ тата расна темăллă ĕçсене тăратнă. Çавна май вăл интереслĕ те пуян пулса тухнă.

А.ГРОМОВА.

Асăмри Таçук

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсен вĕçĕнче эпĕ Октябрьски районĕнчи Шанарпуç шкулĕнче вĕренеттĕм. Çав çулсенче пирĕн ялта, Çĕнĕ Куснарта, библиотека ĕçлетчĕ. Унăн ертӳçи Зинаида Алексеева çамрăксене пуçтарса концертсемпе спектакльсем лартатчĕ. Тăван сăмахлăха вăл чунтан кăмăллатчĕ.

Пĕррехинче вăл мана тĕл пулчĕ те: «Эсĕ мĕншĕн вырăс классикĕсен кĕнекисене кăна илетĕн? Чăваш çыравçисем те селĕм çыраççĕ», – тесе ӳпкелесе илчĕ. Эпĕ вара Степан Асланăн «Ахрат», Ильпек Микулайĕн «Хура çăкăр», Хĕветĕр Уярăн «Шурча таврашĕнче», Василий Красновăн-Аслин «Вутра», Никифор Мраньккан «Ĕмĕр сакки сарлака» романĕсене краççын лампи çутинче вуласа тухрăм. Çак кĕнекесем иртнĕ пурнăçа куç умне кăларса тăратрĕç. Тепрехинче ман алла «Капкăн» журнал лекрĕ. Кулăшла ӳкерчĕксемпе паллашрăм малтанах. Страницăсене уçкаланă май Трофим Иванов-Таçук сăввисен ярăмĕ мана «сатăрласах» тытрĕ:

Çĕнĕ çурта ячĕç хута...
Ордер текен хаклă хута
Алла илсен Куçма хăта
Ире кĕтмесĕр, çĕр хута
Хăпарчĕ иккĕмĕш хута...

Пăх та кур, мĕнлерех çавăрттарать! Чăтаймарăм, журнала киле парса яма ыйтрăм. Пӳрте кĕнĕ-кĕменех сĕтел хушшине лартăм та сасăпа вулама тапратрăм:

Тăхлачпала хăта хаваслă:
Çĕнĕ хваттер кантур пек аслă.
Тавра çап-çутă – сăр та лак,
Шап-шур, сип-симĕс, кăн-кăвак.
Урайĕ тикĕс, тап-таса,
Хуратас килмĕ таптаса...

Çыравçă никамран та шикленсе тăмасть: хыт кукарсене, ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхекенсене çунтарать кăна. Уссăр вырăн йышăнса ларакан завод директорне те, колхоз ертӳçине те шеллемест. Пурнăçра йăпăлтисем, сăмакунçăсем, карьеристсем, вăрă-хурах, тĕрлĕ йăх-ях сахал мар. Çыравçă вĕсене сатира çулăмĕпе ĕнтет те ĕнтет. Ача пулнă-ха ун чухне, анчах пире пурнăç асăрхану пирки аса илтерсех тăратчĕ: çиле хирĕç ан сур тени хăлхана аван кĕрсе вырнаçнă. Пытармастăп: авторăн хăюлăхĕ сатира шăпăрĕпе шăлса тасатасси ун тивĕçĕччĕ.

Кăшт вăхăт иртсен Трофим Ивановичпа куса-куçăн тĕл пулса каласма тӳр килчĕ. Эп ун чухне Шупашкартах пурăнаттăм, «Пионер сасси» хаçатпа çыхăну тытаттăм. Редакцире Валентин Палинов, Василий Петров, Вениамин Тимаков тата ыттисем ĕçлетчĕç. Вĕсем çамрăк корреспондентсене усăллă канашсем парса хавхалантаратчĕç. Эпĕ ытларах Вениамин Тимаковпа хутшăнма тăрăшаттăм. Вăл ытлашши сăмах ваклама юратмастчĕ, сăвăланă йĕркесене çивĕччĕн ăнланатчĕ, хăш чухне хĕрӳленсе кайса тавлашăва кĕме пултаратчĕ.

Пичет çурчĕ ун чухне Володарски урамĕнчи 5-мĕш çуртра вырнаçнăччĕ, пĕрремĕш хутра типографи кунĕн-çĕрĕн кĕрлетчĕ. Çак çурт мана вĕллене аса илтеретчĕ. Шкул ачисемпе çамрăксем анчах мар, шур çӳçлĕ мучисем кунта килсе çӳренине ас тăватăп. Нил Амурцев çыравçăн арăмĕ вахтерта ĕçлетчĕ. Калаçма юратаканскерччĕ хăй, анчах ахаль сулланса çӳрекенсене, уйрăмах хĕрĕнкĕ çыравçăсене, хӳтерсе яма та пултаратчĕ.

Пĕррехинче Вениамин Тимаков çыравçăпа хула урамĕпе пыратпăр. Пире хирĕç пĕр çын васкамасăр хăпарать. Унпа тĕл пулакансем сывлăх сунса иртеççĕ. Сарлака кĕлеткеллĕ хăй, вăтам çулсенче пулас. Пире алă панă май сăвăлла саламларĕ:

«Капкăнри» Таçук,
Ман пекки халь çук...

Çапла пуçланчĕ çыравçăпа паллашса сывăхланасси. Аслă юлташа хамăн пурнăç çинчен йăлтах каласа патăм. Пĕчĕкрен тăлăх ӳсни, шăллăм шыва кайса вилни, анне вăхăтсăр çĕре кĕни пирки пĕлтертĕм. Районти тата республикăри хаçатсене çырса тăни, малашне аслă шкула кĕме хатĕрленни çинчен те хыпарларăм. Ун хыççăн вăл та хăйĕн пурнăçĕ пирки каласа пачĕ. Канаш районĕнчи Пукăртан ялĕнче çуралнă иккен Таçук, Çĕнĕ Аччари колхоз çамрăкĕсен шкулне пĕтернĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă. Каярахпа ялти «Динамо» колхозра председатель пулнă, районти культура çуртĕнче, Йĕпреçри вăрман хуçалăхĕнче, районти «Коммунизмшăн» хаçатра вăй хунă. «Капкăн» журнала куçсан çемйине Атăл тепĕр енчи Сосновка поселокне вырнаçтарнă. «Çул çӳресех вăхăт иртет, редакци ĕçĕ вăя илет, сăвăпа ларма вăхăт çитми пулчĕ, – ӳпкелешсе илетчĕ вăл. – Çак тарана çитсе те «Тал пиçен» кĕнеке кăна кăларма ĕлкĕртĕм, халĕ «Хĕлĕх алапа» ларатăп-ха».

«Динамо» колхозра председательте ĕçленĕ чухне Таçука милици таврашĕ хытах хĕстерме пуçланă иккен, тырă çухалнă тесе суя документсем хатĕрленĕ, Пукăртан ялĕнче пурăнакан куштанрах çынсем çав пӳтсĕр хут айне савăнсах алă пусса панă. Кун пирки чĕрине ыраттарса каласа паратчĕ çыравçă. Çакăн хыççăн вăл ялтан тухса кайма тĕллев тытнă.

Трофим Иванович нумай çынпа туслă пулнă, çыру çӳретнĕ. Пичет çуртĕнче ун патне час-часах «Коммунизм ялавĕнче» ĕçлекен Михаил Юрьев тата Павел Иванов кĕрсе тухатчĕç, Николай Яковлев художник унăн пӳлĕмĕнчен тухма пĕлмен. Иван Малкай сăвăç пулăран таврăннă чухне ал лаппи пек çупахсем парса хăварнине курнăччĕ тата.

Таçук çартан таврăнсан Пушкăртстанри Аваркас районĕнче хаçатра ĕçлесе пурăнакан Виталий Григорьев-Енĕшпе уйрăмах çывăх пулнă. Ун сăввисем Таçук пулăшнипе «Капкăнра» тăтăшах тухатчĕç. Каярахпа Трофим Иванович пултаруллă çамрăка журнал редакцине чĕнсе илнĕ. Тата çакна лайăх ас тăватăп: Таçука Николай Теветкел, Савватий Михайлов, Василий Самойлов çыравçăсем уйрăмах хисеплетчĕç, вĕсене те паллă капкăнçă чылай пулăшнă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче Çĕпĕре ĕçлеме тухса кайрăм, çавăнтан пирĕн çыхăну татăлчĕ. Паллă çыравçă вилни пирки эпĕ темиçе çул иртсен тин пĕлтĕм.

■ **Станислав КУСНАР.**
Куславкка районĕ

Вĕсем Вольскра вĕреннĕ

Саратов облаçĕнчи Вольск хулинчи çăрăн аслă училищи пĕрремĕш курсантсене 1928 çултах йышăннă. Кунта çав вăхăтранпа çĕр-çĕр офицер диплом илсе тĕрлĕ чаçе саланнă. Нумай çул вăл çар самолечĕсене юсакан механиксене вĕрентесе кăларнă. 60-мĕш çулсенче вара ракета училищи те шутланнă, Америка шпионне Пауерса персе антарсан статусне улăштарнă – тылпа транспорт училищи. Паян – Санкт-Петербургри тыл академийĕн филиалĕ. Унтан вĕренсе тухнисен хушшинче Совет Союзĕн Геройĕсем те пур.

1966 çулта мана Украинăра тăракан Чапаев ячĕллĕ çар подразделенийĕн командованийĕ унта вĕренме кĕме экзамен тытма ячĕ. Чăваш каччисем татах пурччĕ: Леня Индюков, Гена Климаншин. Уйрăмах хамăр Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнчи вуннăмĕш класс пĕтернисем асра юлнă: Шупашкар Сĕмĕлтен Володя Падянов, Аксаринтан Володя Мартьянов, Упакассинчен Валерий Степанов...

Пĕрремĕш курсра Монголи çĕр-шывĕн каччисем те пĕлӳ илнĕ. Вĕсене курсантсен столовăйĕнче сахăрне те, çуне те ытларах хурса панă. Ара, хăнасем-çке! Вĕсем пирĕнтен пĕр çул ытларах вĕреннĕ, мĕншĕн тесен малтанхи çул вырăс чĕлхипе кăна пĕлӳ илнĕ.

Пĕрремĕш курс хыççăнхи çар вĕренĕвĕнче эпĕ йывăр амантăм, операци хыççăн инвалид пулса вĕренӳпе сыв пуллашрăм...

Çулсем иртсен Шупашкарта Вольскри çар училищинчен тĕрлĕ çулта вĕренсе тухнисен пĕрлĕхне йĕркелерĕмĕр. Вĕсем пирки кĕнеке хатĕрлеме тытăтăмăр.

Каласа, çырса кăтартмалли чылай. Офицерсем Афган, Вьетнам, Куба, Комбоджа, Чечня çĕрĕсем çинче çапăçнă, тĕрлĕ лару-тăрăва путлантарма хутшăннă. Çав шутра Чернобыльте те. Çӳлте асăннă Леонид Индюков майорпа Геннадий Климашин полковник Афганистанран орденсемпе таврăннă. Алексей Артамонов паян та хулари МЧС тытăмĕнчи службăрах.

■ **Анатолий МАКСИМОВ,**
взвод командирĕн пулăшуçи пулнăскер

СДАЕМ В АРЕНДУ

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

По всем вопросам звонить по тел. 8-967-478-06-12, 28-83-64, 56-04-17.

КИЛЛЕТИ ХУÇАЛĂХ

Ансат вăрттăнлăхсем

Салат хатĕрлеме пуçласан

● Салатра ыхра шăршине юрататăр-и? Унта ыхрапа сăтăрнă ыраш çăкăрĕн хыттине хурăр. Кăштах вăхăтран татăка илĕр. Ыхран ырă тутă кĕртекен шăрши кăштах çеç юлĕ.

● Хатĕрлесенех салата темиçе тумлам лимон сĕткенĕ хушмалла – С витамин ытларах упранса юлĕ.

● Хăйма соусра лайăх сарăлтăр тесен кăштах сĕт хушмалла.

● Салата тăвар сапнă, уксуспа пăрăç хушнă хыççăн çеç ӳсен-тăран çăвĕ ямалла /тăвар çура ирĕлмест/.

● Пахча çимĕçе салат валли уйрăмшарăн пĕçермелле. Тĕрлĕ пахча çимĕçе пĕрле пĕçерсен вĕсем тутине, тĕсне çухатаççĕ.

● Чĕрĕ пахча çимĕçе салат валли апат умĕн çăваççĕ тата тураççĕ, С витамин çухаласран лимон сĕткенĕ сапаççĕ.

● Майонез вырăнне хăйма хушма пулать, унта пĕçернĕ çăмарта саррипе 1 чей кашăкĕ горчица пăтратса ямалла.

Вулакан сĕнет

Селедка туянма та пĕлмелле

Селедка тути вăл мĕнлерех пулнинчен те килет. Эпĕ лавккана кайсан «мăнтăрахххине» суйлатăп – нихăçан та йăнăшмастăп. Тăварланă сельде вĕретсе сивĕтнĕ шыва 30-40 минутлăха яратăп, çапла майпа ытлашши тăвар тухать, пулă тутлăрах пулать. Çавăн пекех ăна сĕтре, сивĕннĕ çăра чейре шӳтереççĕ.

Çапах та техĕмлĕхсем хушса тăварланă пулла шӳтерме кирлĕ мар, унăн ырă шăрши çухалать.

А.МОРСКОВА.
Вăрнар районĕ

Хăнасене кĕтсе

Уяв саккускисем

Тепĕр чухне кĕтмен-туман çĕртенех хăнасем килесси çинчен пĕлтереççĕ. Сире çак рецептсем пулăшма пултараççĕ. Ку апатсене питĕ хăвăрт хатĕрлеме пулать.

«Кăмпа уçланки»

1 пачка краб патакĕ, 2 çăмарта, хытă йышши 200 грамм сыр, хăяр, консервланă кăмпа, салат çулçи, майонез кирлĕ.

Вĕтетнĕ краб патакне, пĕçернĕ çăмартана тата теркăпа хырнă сыра хутăштармалла. Майонез хушса пăтратмалла. Салатран пĕчĕк çаврашкасем тумалла. Хăяра çаврашкан-çаврашкан турамалла, салат çаврисене хумалла, çиелтен – консервланă кăмпа, икĕ пайне шăл хушшине тасатмалли хатĕрпе /зубочистка/ шăтарса çирĕплетмелле.

Чипс салачĕ

1 пачка чипс, 100 грамм кишĕр /морковь по-корейски/, тĕтĕмленĕ 150 грамм кăлпасси, хытă йышши 100 грамм сыр, 6 апат кашăкĕ майонез, ыхра, ешĕл çимĕç кирлĕ.

Кăлпассине тăрăхла татăксем туса çӳхен касмалла, сыра шултра теркăпа хырса кишĕрпе хутăштармалла, майонез сапмалла. Тутине кура вĕтетнĕ ыхра хушма юрать. Салата чипс çине хумалла. Ешĕл çимĕçпе илемлетмелле.

Помидорпа, сырпа

4-5 татăк батон, 2 сосиска, 1 помидор, 2 шăл ыхра, 4 апат кашăкĕ теркăпа хырнă сыр, ешĕл çимĕç, майонез, тутине кура тăвар кирлĕ.

Сосискăпа помидора турамалла, ешĕл çимĕçпе ыхрана вĕтетмелле. Майонезпа тăвар хушса пăтратмалла. Хутăша батон татăкĕсем çине вырнаçтармалла. Духовкăра 10 минут пĕçермелле.

Бутерброд

3 татăк хура çăкăр, 100 грамм пĕвер паштечĕ, кăштах укроп, помидор, сыр касăкĕсем кирлĕ.

Çăкăр татăкĕсем çине пĕвер паштечĕ сĕрмелле, çиеле укроп хумалла. Помидорпа сыра çӳхен касмалла, çăкăр çине вырнаçтармалла. Шур çырлипе /клюква/ илемлетме юрать.

Çанталăка сăнатпăр: çурла уйăхĕнчи паллă кунсем

14. Маковей кунĕ. Пыл хурчĕсен уявĕ, вĕсем пыл пухма чарăнаççĕ. Пыл карасне касса çиеççĕ – Пыл спасĕ. Çу кунĕсене ăсатни. Çак кунран пуçласа вăйлă сывлăмсем ӳкме пуçлаççĕ. Чĕкеçсемпе вĕршĕнсем ăшă еннелле кайма тытăнаççĕ.

16. Çил-тăвăллă Антун кунĕ. Çавра çил тухсан юрлă хĕл пулмалла. Пур енчен те çавра çил пуçлансан хаяр та шартлама, нумай юрлă хĕле кĕт.

19. Пан улми спасĕ. Пуçласа кĕре чыслаççĕ. Кунĕ типĕ пулсан кĕр типĕ килмелле, çумăрлă пулсан – йĕпе-сапаллă.

23. Лавренти кунĕ. Çак кун кăнтăрла çырмасемпе кӳлĕсенчи шыв çийĕ мĕнлерех пулнине сăнаççĕ: лăпкă – кĕр лăпкă килмелле, хĕл – çил-тăмансăр. Кунĕ шăрăх е çумăрлă пулсан – кĕр çавăн пек тăсăлса иртет.

27. Çулçă тăкăнма пуçлать. Тăрнасем инçе çула тухнă – эппин, юпа уйăхĕн варринче сивĕсем пуçланаççĕ, вĕсем кайма пуçламан – хĕл каярах юлса килет.

28. Успени кунĕ. Çу кунĕсене ăсатаççĕ, тырă-пулă пухса пĕтереççĕ, юлашкисене выраççĕ. Юлашки чĕкеçсем ăшă вырăналла çула тухаççĕ.

31. Лаврпа Фрол кунĕ. Кĕр сиввисем пуçланаççĕ, пĕрремĕш хут тăм ӳкет. Çак кун тĕлне кĕр тыррисене акса пĕтермелле – унсăрăн лайăх тухăç кĕтмелли çук. Ĕлĕкрех хресченсем армути тымарне кăларса сăнанă: тымарĕ тачка – килес çул тырă вăйлă пуласса кĕт.

Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.

Спорт

Патăрьелсем уявра та сывлăха çирĕплетеççĕ

Иртнĕ шăмат куна ку çулти чи сывлăхлă кун тесен те йăнăшмăпăр. Çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче республикăра Физкультурник кунне халалласа 300 ытла спорт мероприятийĕ иртнĕ. Çак кун сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем спорт керменĕсенче тӳлевсĕрех сывлăха çирĕплетме пултарнă.

Акă Патăрьел районĕнчи «Паттăр» ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн стадионне те халăх йышлăн пухăннă. Юхмапа Пăла тăрăхĕнче пурăнакансем спорта юратас енĕпе чăнласах палăраççĕ çав. Уявра 500 ытла спортсмен çăмăл атлетика: армспорт, минифутбол, пляж волейболĕ, кире пуканĕ йăтас енĕпе ăмăртнă. Ытти мероприятири пекех спорт ветеранĕсем те айккинче юлман. 40-60 çулсенчи арçынсен йышĕнче 400 метра чупассипе Шăхач ял тăрăхĕнчи Петр Макаров 1-мĕш вырăн йышăннă. Аслă Арапуç ял тăрăхĕнчи Иван Киргизовпа Турханти Терентий Давыдов иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайланă. Кире пуканĕ йăтассипе Тури Туçари Ринат Сафин /70 килограмченхи виçере/ 1-мĕш вырăн йышăннă. Аслă Чемен ял тăрăхĕнчи Владимир Портнов иккĕмĕш пулнă. Сăкăт ял тăрăхĕнчи Алексей Алексеевăн виççĕмĕш вырăнпа çырлахма тивнĕ.

Çак кунах Патăрьел районĕнче шахматла тата шашкăлла выляссипе ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕн Олег Мешковăн парнисене çĕнсе илессишĕн пысăк ăмăрту иртнĕ. Сăмах май, Олег Вадимович ентешĕсене манмасть, спорт ăмăртăвĕсене ирттерме, йĕркелеме яланах пулăшать. Хăй те вĕсене тăтăшах хутшăнма тăрăшать. Асăннă турнирăн тĕп тĕллевĕ – шашка-шахмат вăййисене анлăрах сарасси, спорт ăсталăхне ӳстересси, районти чи лайăх шахматистсемпе шашистсене тупса палăртасси, вĕсене аталанма пулăшасси, хавхалантарасси.

Хĕрӳ тупăшура шашистсен йышăнче Патăрьел ял тăрăхĕнчи Николай Федоров, Пикшикри Владик Антонов, Нăрваш Шăхальти Владик Григорьев палăрнă. Хĕрарăмсенчен Пикшикри Наташа Кузьминана çитекенни пулман. Тури Туçа ял тăрăхĕнчи Надежда Яковлевăпа Сăкăт ял тăрăхĕнчи Роза Положина иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайланă. Шахматистсен хушшинче вара Пикшикри Фрадия Чинкина çĕнтернĕ. Ишлĕ Шетмĕри Елена Краснова – иккĕмĕш, Тури Туçари Марина Михайлова виççĕмĕш вырăн йышăннă. Арçынсен хушшинче Шăнкăртамри Рафаил Якупов мала тухнă. Тăрăнти Владимир Марковпа Сăкăтри Анатолий Тинюков иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайланă. Çĕнтерӳçĕсемпе призерсене Дипломсемпе, хаклă парнесемпе чысланă. Çавăн пекех уяв ячĕпе хастар та пуçаруçă спортсменсем, спорт ветеранĕсем ятарлă парнесене тивĕçнĕ.

■ **Анна ГРОМОВА**

Асăрханăр!

Ача мопед çине ларсан...

Çулла çулсем çинче икĕ кустăрмаллă транспорт хатĕрĕсене – мотоциклсемпе мопедсене, скутерсемпе велосипедсене – час-часах курма пулать. Меллĕ, перекетлĕ. Анчах автомобилистсемпе танлаштарсан водительсен çак ушкăнĕ çул çинче инкеке лекес хăрушлăх чылай пысăкрах.

Аварие лексен суранĕсем те йывăртарах. Мотоциклпа пынă май унăн водителĕ, тĕрĕссипе, хӳтлĕхсĕр. Бамперпа капот та, хăрушсăрлăх пиçиххипе минтерĕ те çук-çке. Çавна май кашни мотоциклистăн яваплăха туймалла: шанчăклă амуници пултăр – ӳкес тĕк вăл кĕлеткене, пуçа хӳтĕлетĕр. Чи кирли – мотошлем. Вăл аварие лекес пулсан пуçпа çапăннă май ăна амантасран шанчăклă хӳтĕлетĕр. Шел те, чылайăшĕ хăйĕн хăрушсăрлăхĕ пирки шухăшламасть – мотошлем тăхăнмасть. Мотоцикл пассажирĕсем пушшех çак хатĕрпе усă курмаççĕ.

Кăçалхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче каç еннелле Шупашкарти Гагарин урамĕнчи 41-мĕш çурт патĕнче 19 çулти водитель мопеда «пăхăнтарайман» та – бордюр çине тăрăнса тӳнсе кайнă. Хăй аманманха, анчах пассажирĕ, 16 çулти каччă, суранланнă.

Çулталăк пуçланнăранпа вара мотоцикл, мопед, скутер водителĕсем хутшăннипе 28 авари пулнă, вĕсенче 1 çын вилнĕ, 27-ĕн аманнă. Çул çитменнисем руль умне ларса инкек тӳсни пушшех пăшăрхантарать. Вĕсем çул-йĕр правилисене пĕлмеççĕ, ашшĕ-амăшĕ вара çăмăлттайскерсене «тетте» туянса парать – пĕлсе тăрса тенĕ пек вĕсене хăрушлăха кĕртсе ӳкерет. Тĕп хулара кăна çулталăк пуçланнăранпа çул çитмен 14 водитель тата вĕсен çамрăк икĕ пассажирĕ инкек тӳснĕ.

Утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче 17 сехетре Шупашкарти Айзман тата Декораци урамĕсем хĕресленекен вырăнта скутер водителĕ сылтăмран сывхаракан «Тойота Королла» автомобиле çул паман. Правилăсене пĕлмен ĕнтĕ – руль умĕнче 11 çулти шкул ачи пулнă вĕт, мотошлем, ытти хӳтлĕх хатĕрĕ тăхăнманскер. Правилăсене сĕмсĕррĕн пăснă май авари пулнă, ачана больницăна ăсатма тивнĕ.

Аслисем çакна пĕлме тивĕç: мопедпа тата скутерпа 16 çул тултарсан тата водитель удостоверенийĕ пулсан кăна çӳреме юрать. Регистрацин документĕсемсĕр, çавăн пекех водитель удостоверенийĕсĕр çула тухсан мотоцикла штраф стоянкине ăсатаççĕ. Çул-йĕр правилисене пăснăшăн мотоциклистсем администратривлă майпа ытти водительпе тан явап тытаççĕ.

Çул-йĕр правилисене сĕмсĕррĕн пăснă ачасемпе çыхăннă материалсене çул çитменнисемпе ĕçлекен пайра тишкереççĕ, кайран РФ КоАПĕн 5.35 статйипе килĕшӳллĕн ашшĕ-амăшне административлă майпа явап тыттараççĕ. Кăçал çак статьяпа скутер утланса çула тухнă ачисемшĕн тăватă ашшĕ-амăшĕ явап тытнă ĕнтĕ.

Велосипедистсем те пăшăрхантараççĕ. Аслисен велосипед туянса панă май ачисене çул çинче уямалли правилăсене ăнлантармаллах. Чăн та, ача çул çине тухнă май пĕтĕм яваплăха туясси иккĕленӳллĕ. Çавна май инкексен шучĕ ӳсет.

Утă уйăхĕн 13-мĕшĕнче 17 сехет те 40 минутра Шупашкарти Орлов тата Ашмарин урамĕсем хĕресленекен çĕрте ВАЗ-21093 автомобиль 9 çулти велосипедиста, светофорăн хĕрлĕ сутине пăхмасăр «зебра» тĕлĕнче çул урлă каçма тăнăскере, пырса çапнă. 30 çулти водитель пĕр тăхтамасăр тормоз педалĕ çине пуснă пулин те инкеке сирсе яраймăн. Пуçне амантнă ачана больницăна ăсатма тивнĕ. Паянхи кун тĕлне 16 çул тултарман 10 çамрăк çул-йĕр правилисене пăснине шута илнĕ, вĕсем тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем пуласçех.

Раççей ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн ПАИ пайĕ чи малтанах çитеннисене чĕнсе калать: мототранспорт хатĕрĕ – хаклă «тетте» кăна мар, пысăк хăрушлăх çăл куçĕ те. Ачасен пурнăçĕпе сывлăхĕ сирĕн яваплăхран нумай килет.

■ **Елена САФОНОВА**

Сăмах каçмăш

Владислав ПЛАТОНОВ /Шупашкар районĕ, Шоркка ялĕ/ хатĕрленĕ

Сылтăмалла: 6. Йывăç-тĕм. 7. Подшипникри çавра металл. 8. Чăвашпа çармăс кӳрши. 9. Хуралтă. 10. Пĕчĕк йышлă çынсем. 13. Бензинри число. 16. Нумай халăхлă çĕр-шыв. 17. Шуса çӳрекен чĕр чун. 19. Пуян патĕнче пилĕк авакан. 22. Лайăх ... пасарта выртмасть. 24. Алла ... йăвине чикме хушман. 25. Шурă çăкăр. 26. Пан улми сорчĕ. 27. Çурхи ĕççие хутшăнакан.

Аялалла: 1. Вăхăтлăх пурăнмалли çурт. 2. Телей кӳрекен авăнчăк тимĕр. 3. Польшăпа Венгрири сăрт-ту. 4. Газлă пылак шыв. 5. Пружинăллă сетка, спорт снарячĕ. 11. Кăтра, кукша, ... пуç. 12. Ĕçе питĕ аван пĕлекен. 14. ... лайăх шăтсан ял çынни савăнать. 15. Мексикăри ӳсен тăран. 18. Мускавпа Питĕр хушшинчи пуйăс ячĕ. 20. Париж - Дакар авточупу. 21. Ученăй, тĕпчевçĕ. 22. Ахрат çырма. 23. Савăт е пӳлĕм.

Сăмах каçмăш хуравĕсем

Сылтăмалла: 6. Акаци. 7. Шарик. 8. Тутар. 9. Аптăр. 10. Ушкăн. 13. Октан. 16. Кинăн. 17. Катта. 19. Тарçă. 22. Тавар. 24. Сăпка. 25. Кунăн. 26. Ранет. 27. Акаçă.

Аялалла: 1. Вăрак. 2. Такан. 3. Кăртат. 4. Сиппат. 5. Батут. 11. Шăкăла. 12. Ăстăç. 14. Капăла. 15. Аграва. 18. «Сапсан». 20. Рапани. 21. Ăçчах. 22. Тарăн. 23. Ванна.

Ĕмĕтлĕх

Ямашпа Яман – пĕр тăвансем

Мăн Ямаш ялĕ ăçтан пуçланнă? Кун пирки паян никам та тĕплĕн каласа кăтартма пултараймасть.

Пĕчĕк чухне мана ĕне пăхма яратчĕç. Пускилте Йăван мучи пурăнатчĕ. Касура кунĕпех унпа пĕрле çӳреттĕмĕр. Ватă çын темĕн те пĕр каласа кăтартатчĕ. Ĕлĕк пирĕн тăрăхра çын кĕрсе тухмалла мар чăтлăх пулнă. Лаштра юмансем ӳснĕ. Петĕр патша вăхăтĕнче Питĕр хулине аталантарма Чăваш Енрен юмансем касса ăсатнă. Чухăн хресченĕн пурнăçĕ нихăçан та çăмăл пулман. Тĕрлĕ налук хунă. Тӳleме вăй ситерейменнисем чăтлăха тарса пытаннă. Вăрман каснă, кил-çурт çавăрнă, тымар кăкласа тырă акма çĕр хатĕрленĕ. Çапла çĕнĕ вырăнта пурнăç вĕреме пуçланă.

Ялтан инçе мар Паттăр лаççи варрĕ пур. Ăна Юман варрĕ те тетчĕç. Эпĕ ас тăвасса унта икĕ юман ӳсетчĕ. Çав варта юман тункати нумайччĕ. Çавăнта вырнаçнă та Паттăр лаççи. Ĕлĕкрех тимĕрçĕсене паттăрпа танлаштарнă. Паттăр лаççи варрĕ урлă аслă çул иртнĕ. Çул çӳрекенсене лаша ураписене юсаса панă. Хăйсене пурăнма тата вăрăхурахран сыхланма çурт лартнă. Ял ячĕ çын ячĕпе çыхăннă.

Малтан пирĕн ял Хĕрлĕ Чутай районне кĕнĕ. Халĕ – Элĕк районĕнче. Ямашпа Яман пиччĕшĕпе шăллĕ пулнă. Халĕ Яман ятне Яманкасси ялĕ илнĕ. Пирĕн ялсем пĕр йăхран пулнă. Вăл Хĕрлĕ Чутай районне кĕрет.

Пирĕн яла пуçарса яракансем Канаш районĕнчи Мăн Ямашран пулнă. Халăх халапĕ ăруран ăрăва куçса пырать. Пĕри каламасан, тепри шарламасан тата кам пĕлтĕр?

■ **Виссарион М.**
Элĕк районĕ,
Мăн Ямаш ялĕ

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

В соответствии с постановлением администрации Шемуршинского района от 05 августа 2014 года №265, отдел экономики администрации Шемуршинского района сообщает о проведении аукциона 12 сентября 2014 года в 10.30 часов, который состоится по адресу: с. Шемурша, ул. Советская, д. 8, в здании администрации, каб. 24.

По продаже земельных участков с кадастровыми номерами:

Лот №1 - 21:22:140101:134, из земель сельскохозяйственного назначения площадью 40907 кв.м., для строительства птицефабрики, находящийся по адресу: Шемуршинский район, Бичурга-Баишевское сельское поселение. Начальная цена 219700 (двести девятнадцать тысяч семьсот рублей) руб. 00 коп.

Лот №2 - 21:22:130101:413, из земель сельскохозяйственного назначения, площадью 15559 кв.м., для строительства свинокомплекса, находящийся по адресу: Шемуршинский район, Бичурга-Баишевское сельское поселение. Начальная цена 83600 (восемьдесят три тысячи шестьсот) руб. 00 коп.

Заявки на участие в аукционе принимаются с 09 августа 2014 года по 07 сентября 2014 года, с 8 до 17 часов в отделе экономики. Рассмотрение заявок на участие в аукционе будет проводиться 10 сентября 2014 года в 14.30 часов. Регистрация участников аукциона проводится 12 сентября 2014 года с 9.00 до 10.00 часов.

Шаг аукциона составляет 5% от начального размера арендной платы, размер вносимого задатка 20% от начального размера арендной платы.

Телефон для справок: 2-32-40. Более подробную информацию можно найти на официальном сайте администрации Шемуршинского района и на сайте торгов torgi.gov.ru

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет:

- с кадастровым номером 21:08:340308:438 площадью 8626 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос;
- с кадастровым номером 21:08:340308:441 площадью 14433 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос.;
- с кадастровым номером 21:08:340308:442 площадью 16828 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос;
- с кадастровым номером 21:08:340308:449 площадью 5243 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: (83532)6-14-26.

УСЛУГИ

250.Кровельные, фасадные работы. **Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

530.Юрист. Т. 8-927-998-55-00.

ТРЕБУЮТСЯ
● **МОНОЛИТЧИКИ,**
● **БЕТОНЩИКИ,**
● **РАЗНОРАБОЧИЕ.**
Вахта. Бесплатное питание и проживание.
Тел.: 89112657907

ПРОДАЮ

4.Пластиковые ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка - бесплатно. Т. 89875766562.

8.Гравмассу, песок, щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89051990122.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Т. 444433.

19.Гравмассу, песок, **керамзит, бой** кирпича. Т. 89033225766.

61.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

75. Дымоходные трубы из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

79.Прицеп мотоблока, **мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

124.Песок, щебень, гравмассу, керамзит, торф, кирп. бой, цемент. Т. 89033220479, 48-04-79.

172.Гравмассу, керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

178.Гравмассу, песок, цемент. Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 89278497674.

249.БРУСЧАТКУ, плитку тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

323.Песок карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, **бетон,** раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

341.Гравмассу, песок, щебень. Доставка. Т. 89030666630.

372.Песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, **керамзит.** Доставка. Т.: 8-960-308-08-54, 8-917-066-04-80.

464.Косилки, грабли, окучники, пресс-подборщики, **картофелекопалки.** Доставка. Т. 8-937-956-00-54.

518.Гравмассу, щебень, песок речной, карьерный; **чернозём,** глину. Д-ка. Т. 89520269954.

Чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрацинĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"- 78353

Директоршăн-тĕп редакторшăн Г.А.МАКСИМОВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.Н.БАГАДЕРОВА

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ: hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru
Хаçата "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ял-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 11.08.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7411. Заказ 2965.